# Паян кинемейсем ялта икĕ хутлă чаплă керменсенче пурăнаççĕ • 3 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăша*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĕРАРăМĕ

42(912) №, 2015, октябрь/юпа, 24

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

●Унăн эрешĕсенче – халăх историйĕ 2 стр.

●Çĕнĕ Шуртанран шкула пĕртен-пĕр ача çӳрет 5 стр.

●Ыхрана, кишĕре епле упрамалла? 8 стр.

●Арăм çеç мар, савни те кирлĕ 9 стр.

ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ

## Çынна ыра туни савăнтарать



Любовь ФЕДОРОВА, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх артистки

Пире, чăвашсене, хамăр республикăра хăтлă. Çав вăхăтрах тĕнчери лару-тăру лăпкă мар. Вăрçă мĕн чухлĕ çыннăн кун-çулне татать. Вĕсемшĕн пăшăрханса та чун ыратать. Тăнăçлăха мĕншĕн хаклама пĕлместпĕр-ши?

Çынсем пĕр-пĕрне хисеплеменнине, пулăшманнине, ырă сунманнине йышăнас килмест. Пурнăçра сивĕ чунлă пулмалла мар. Тĕслĕхрен, ватă çынна çул урлă каçма е общество транспортне ларма пулăшсан та кăмăл уçăлать. Кирлĕ ĕç тунăшăн темиçе кун савăнса, хăпартланса çӳретĕп. Урамра алă тăсса тăракана та укçа паратăп. Эпĕ уншăн çука юлмастăп вĕт. Ан тив, кирек мĕнле усă куртăр вăл çав нухратпа. Хăй манса та каять пуль. Мана вара хам ырă туниех çунат хушма май парать.

Халĕ пурнăç укçа çинче тытăнса тăрать. Уншăнах вăрçăнаççĕ, çапăçаççĕ, вĕлереççĕ. Чун пуянлăхне малти вырăна кăларасчĕ.

Шкул хыççăн пĕлĕве тарăнлатнăшăн та тӳлемелле. Мăнуксене вĕрентме укçа çитерĕпĕр-ши? Çакă та шухăшлаттарать.

Çамрăксем театра сайра-хутра килеççĕ. Пĕр енчен, çĕнĕ технологисем аталанни лайăх. Спектакльсене килтех курма пулать. Анчах куçран куç пăхни тем тесен те пахарах, витĕмлĕрех. Тепĕр енчен, Интернет ачасен ăс-тăнне хавшатать. Ашшĕ-амăшĕн воспитани тĕлĕшĕпе тимлĕрех пулмалла. Аслă ӳсĕмрисем те культурăпа кăсăкланасшăнах мар. «Спектакль курма вăхăт çук», – теççĕ. Епле-ха апла? «Мĕн тăватăр?» – ыйтатăп. «Хамăр та пĕлместпĕр», – хуравлаççĕ.

Эпĕ çаплипех ялта пурăнатăп, çĕр ĕçне юрататăп. Халĕ те пахчаçимĕç сутма тухатăп. «Укçа çитмест-и сана?» – интересленеççĕ. Çук, пуйма тĕллев тытман. Шалу та, пенси те параççĕ. «Эсир хула халăхне пахчаçимĕçпе тивĕçтерсе çитерейместĕр те – пулăшас тетĕп», – йăл кулатăп сутă тăвакансене хирĕç пăхса. Çимĕçшĕн хаклă ыйтмастăп. «Мĕн чухлĕ паратăр – çав хакпа илĕр», – ăнлантаратăп ман умра чарăнакансене. «30 тенкĕ тăраканнине 5-пех сутатăр-и?» – тĕлĕнеççĕ вĕсем. Туянччăр, киле пушă алăпа пырса ан кĕччĕр. Каларăм-çке, маншăн çынна ырă туни пĕлтерĕшлĕрех.

**Çанталăк**

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 24.10 | + 2 | + 1 |
| 25.10 | + 1 | 0 |
| 26.10 | + 1 | + 1 |
| 27.10 | + 2 | + 1 |
| 28.10 | 0 | 0 |
| 29.10 | + 2 | – 2 |
| 30.10 | – 2 | – 4 |



Марина ТУМАЛАНОВА сăнӳкерчĕкĕ

2 стр.

# Хунямăшĕ кинĕн ташши-юррипе киленнĕ

**Йӳçпан урамĕпе Ландышевсен килне шыраса утатăп. Вĕсен хапхи ыттисенчен уйрăлса тăни çинчен илтнĕччĕ-ха. Акă вăл, Нарспилли… Сăвă йĕркисене те çырнă. Ун умĕнчен чарăнмасăр иртеймĕн. Çакăнта литературăна юратакан, илеме хаклакан çынсем пурăнни куçкĕрет. Авă хуçисем те мана хирĕç тухрĕç.**

ÇЫРĂНТАРУ – 2016

ОКТЯБРЬ: 15-25

Почтăпа редакцисен пĕрлехи акцийĕ:

ÇЫРĂН ТА – УКÇУНА ПЕРЕКЕТЛЕ

«ХЫПАР» – 570,30 тенкĕ. Çырăнтару индексĕ – В 4800

«ХЫПАР» – эрнекун – 297,84 тенкĕ. Çырăнтару индексĕ – В 8353

«ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ» – 316,50 тенкĕ. Çырăнтару индексĕ – В 1515



КУРАВ

# Эреш тĕнчи



**«Эрешсен тĕрлĕ тĕслĕ тĕнчи» курав ĕçлеме пуçларĕ. ЧР халăх ăстисен маçтăрĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, чăваш халăх тĕрри çинчен нумай çырнă ĕçсен авторĕ Евгения Жачева 75 çул тултарнине халалланă ăна.**

Уява Чăваш наци музейĕн директорĕ Ирина Меньшикова уçрĕ. Вăл пурне те Чăваш тĕррин музейĕнче пĕрремĕш ятарлă курав уçăлнă ятпа саламларĕ.

ЧР культура министрĕн çумĕ Татьяна Казакова Евгения Николаевнăна чечек çыххи парнеленĕ май хăйĕн ĕçне чунтан парăннăшăн, чăваш тĕррине никамран вăйлăрах юратнăшăн ăшшăн тав турĕ.

Паллă тĕрĕçĕ Çĕрпӳ районĕнчи Тĕнсĕр ялĕнче çуралнă. Вăл ачаран ал ĕçне юратнă. Амăшĕнчен вĕреннĕ çак ăсталăха. Çăмăл пулман вăрçă хыççăнхи пурнăç. Çирĕп чунлă хĕрача шкулта вĕреннĕ чухнех хăй сусăррине пăхмасăр иртен пуçласа каçчен колхозра тăрăшнă. Вăл пĕчĕкренех музыка ăсти пулма ĕмĕтленнĕ. Шкул хыççăн ятарласа педагогика институтне çул тытнă, вĕренсе тухнă хыççăн музыка учителĕнче ĕçлеме тытăннă. Анчах та сывлăхĕ хавшасах пынине кура пиччĕшĕ патне Туркменистана, ăшăрах çĕре, тухса кайма тĕв тăвать. Кунта та ахаль лармасть, музыка урокĕсем ертсе пырать вăл. Хăйне йĕркеллĕрех туйма тытăнсан тăван тăрăха таврăнать хĕр. Ача садне ĕçе вырнаçать, шăпăрлансене юраташша вĕрентме тытăнать. Турă пани канăç паманнине палăртмасть Евгения Николаевна, 1982 çулта каллех хăйĕн юратнă ĕçне пуçăнать. Йĕппе çипе алăран ямасăр каççерен шурă пусмана эрешсемпе илемлетет. Унăн чи пĕрремĕш ĕçĕ – «Йăх-несĕл» панно. Шăпах çавна хатĕрленĕ чухне чăваш тĕррипе кăсăкланма, манăçнă çĕвĕсене тĕпчеме пуçлать те вăл. «Чăваш тĕррин çĕввисем» альбом хатĕрлет, кĕçĕн классенче чăваш тĕррине вĕрентессин программине хатĕрлет. 1992-2011 çулсенче Шупашкарти 39-мĕш шкулта ĕçленĕ хушăра унăн вĕренекенĕсем пĕрре мар «Ăстаçă» республика конкурсĕнче çĕнтернĕ. Вăл вăхăтра ачасем çеç мар, амăшĕсемпе пĕрле кукамăшĕ-асламăшĕ те чăваш тĕрри тĕрленĕ. Евгения Николаевнăн паянхи кун та вĕренекенĕ нумай. Тĕрĕ вăрттăнлăхне алла илес тесе килне те часчасах пырса çӳреççĕ. Пурне те хаваспах йышăнса эрешсен тĕрлĕ тĕслĕ тĕнчипе паллаштарать вăл.

Евгения Николаевна пулăшнипе Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ библиотекăра «Тĕрĕ тĕнчи» клуб уçăлнă.

Канаш районĕнчи Шăхасан вăтам шкулĕнче 22 çул чăваш тĕррин кружокĕ ĕçлет. Арçын ачасемпе хĕрачасем тăхтав вăхăтĕнче те алăран йĕппе çип ямаççĕ. Кунта та Евгения Николаевнăн витĕмĕ пысăк.

Авалхи чăваш тĕррине паянхи куна илсе çитерме мехел çитернĕ Евгения Жачева. Унăн тĕррисенче – чăваш халăхĕн аталанăвĕ, сутă пуласлăхĕ, йăхсен пĕтĕçĕвĕ, тĕрлĕ халăх хушшинчи тăванлăх...

Евгения Жачева паянхи кун та Раççей тата регионсен шайĕнче иртекен куравсене хутшăнать. Унăн тĕлĕнмелле паха ĕçĕсене пăлхарсем те пысăка хурса хаклаççĕ. «Раççей Федерацийĕн халăх маçтăрĕ» ята ахальтен тивĕçмен вăл.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

ХАÇАТ ТУСĔ

# Шăпана ӳпкелемелли çук

**Патăрьел районĕнчи Çĕнĕ Ахпӳртре пурăнакан Александра Океанова «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата мĕн тухма пуçланă кунранпа пĕр сиктерми çырăнса илет, кашни шăматкуна чăтăмсăррăн кĕтет. «Кичем чухне «Чăваш хĕрарăмĕпе» йăпанатăп. Сĕре интереслĕ, никăш хаçатра çуккине вуласа пĕлме пулать, хĕрарăм шăпипе кун-çулне, çемье пурнăçне аван çутатса паратăр», – терĕ Александра Андреевна урамра курсан.**



84 çулти Саня аппа пĕччченех пурăнать. Аслă хĕрĕ Лида Мурманскра, кĕçĕнни Лабытнангире тĕпленнĕ. Шел те, вăталăххи Арина йывăр чире парăнтарайман, çамрăклах пурнăçран уйрăлса кайса амăшне ĕмĕрлĕхе хуçса хăварнă. «Ман пата яла килсе пурăнасшăнччĕ вăл... Ывăлĕ те хăйĕн пекех. Шупашкарта шăл тухтăрĕнче ĕçлекенскер кукамăшне питĕ юратать, пĕрмай шăнкăравлать, сывлăхпа кăсăкланать, вăхăчĕ сахал пулин те килсе çӳреме май тупать», – чунне уçать Саня аппа.

Ахаль ларма хăнăхман Александра Андреевна картиш тулли хур, чăх-чĕп усрать. Сурăхĕсене нумай пулмасть кăна мишерсене сутса янă. Пĕр вырăнталаратăра пĕлменскер тăванĕсене пахчаçимĕç пухса илме, тирпейлеме пулăшать. Пушă вăхăтра çăм арлать, алса-чăлха çыхать.

Ачаллах ĕçе пуçăннăскер çемье çавăрниччен «Республикăри сысна чи лайăх пăхакан», «Республикăри чи лайăх пахчаçă» ятсене тивĕçнĕ. Пĕр çыхха тирпейлĕ чиксе хунă Хисеп хучĕсене арчаран кăларчĕ Саня аппа. Чукун çул çинче монтажникре 29 çул тăрăшнă Александра Океанова Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденне те тивĕçнĕ.

«Тĕрĕссипе, Коми Республикине йĕркеллĕ, этем евĕрлĕ пурăнма пĕлменнипе тарăхтарса çитернĕ упăшкаран хăтăлас тесе комсомол путевкипе тухса кайрăм. Чăваш кĕпипе, саппунпа çитнĕскер çине кăшт тĕлĕнерех пăхни халь те асра. Майралла тăхăнса çӳреме укçитенки те пулман, маншăн чăваш тумĕ питĕ хаклăччĕ. Çамрăклăхăм чукун çул çинче иртрĕ. Шăпана ӳпкелемелли çук. Çавăнтах телейĕме тупрăм, хамăр тăрăхри Нăрваш Шăхаль çыннипе пĕрлешсе иккĕмĕш хут çемье çавăртăм. Шел те, упăшка аварире вилчĕ, тĕлĕнмелле лайăх çынччĕ», – хăйĕн пурнăçĕ пирки каласа кăтартрĕ Саня аппа. Малтанхи мăшăрĕ кӳрентернĕ самантсене çулсем иртсен те манаймасть Александра Океанова. 14 çулранпа туслă пулнă Родионпа. Кĕтсе илмесрен шикленсе каччă салтака кайиччченех вăрласа кĕнĕ хĕре. Анчах та çартан таврăнсан тин мăшăрланнă унпа. Качча кайиччченех ача çуратнăскере ял çынни ăнланать-и вăл вăхăтра? Арăмĕ пур çинчех урăххисене куç хывса тарăхтарнă арçын. Таврара намăс кăтартса çӳрекенскере касарайман Саня. Икĕ ачаллă çамрăк хĕрарăм нимрен шикленмесĕр ют çĕре тухса кайма пултарнинчен тĕлĕнет те, хĕпĕртет те паян Александра Андреевна. Ăна унта никам кĕтсе тăман пулин те ĕçре ӳркенменскер пурнăçне çĕнĕрен майлаштарса яма пултарнă. Чыс-хисепе хăйĕн тăрăшулăхĕпе чĕрĕлĕхне кура çĕнсе илнĕ вăл.

«Çак çурта ятарласа çывăх çыннăм валли туянтăм. Ватăличченех пурăнчĕ, мана пил парса хăварчĕ. Аннерен хакли çук çĕр çинче, пур чухне упрамалла, юратмалла вĕсене. Вăл кăна кирек хăçан та ăнланать, çунатти айне илсе ăшăтать», – сывпуллашрĕ манпа ăшпиллĕ те ырă чунлă Саня аппа.

**Елена ГЛУХОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Хунямăшĕ кинĕн ташши-юррипе киленнĕ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

**Николай Васильевичпа Галина Петровна ал ĕçĕпе аппаланма юратаççĕ. Шухăш хăвачĕ мăшăра пӳрт умне те, картишне те, пахчана та хăйнеевĕрлетме пулăшнă. Йăрансен хушшинче тапăккĕсĕкрен ăсталанă карчăкпа старик вырăн тупнă. Арçык купăс каланăн, хĕрарăм ташланăн туйăнать. Кирлĕ мар хатĕр-хĕтĕртен сысна çури, акăш, пальма йывăççисем касса кăларнă Николай Васильевич. Ларса канмалли вырăна кĕленчерен ăсталанă. «Унта çуллахи вăхăтра упăшкапа иксĕмĕр чей ĕçетпĕр», – тет çемье вучахне упракан. Чечек юратаççĕ Ландышевсем. «Йĕри-таврари хăтлăх кăмăла уçать, çĕнĕ ĕçе пуçăнма хавхалантарать», – пытармасть Галина Петровна.**

**Малтан кил хуçи хăех хапха çине Нарспипе Сетнере ӳкернĕ. Анчах вăхăт иртнĕçемĕн çак ĕçе хĕвел тĕссĕрлетнĕ. Халĕ Николай Васильевич ывăлне сурт хăпартма пулăшать. Çавăнпах çĕнĕрен ӳкерме вăхăт çук унăн. Галина Петровна нумай шухăшласа тăман – открыткăна пысăклатса плакат саккас панă.**

### Уяв илемĕ

Уявра та савăнма пĕлеççĕ вĕсем. «Çĕнĕ çул каçне уйрăмах тăрăшса хатĕрленеттĕмĕр. Мăшăрăм пулăшнипе темле сăнара та çаврăннă вĕт. Уншăн конкурсра 3-4 çул пĕрремĕш вырăн йышăннă. Çакăншăн кашнинчех сысна çури панă пире. Хуняма çине тăнипех туйран та юлман. «Кин, эс юрласа ташланине курма пыратăп. Унта пĕтĕм халăх сана сăнать», – тетчĕ вăл хăпартланса», – аса илет хĕрарăм. Çĕнĕ çи-пуç çĕлетме те ӳркенмест кил хуçи арăмĕ. Халĕ тăханаканнине ял хĕрарăмĕсем те тӳрех килĕштернĕ. Вĕсем те çавнашкаллине илесшĕн.

### Вĕрентекенсен витĕмĕ

Николай Васильевичпа Галина Петровна ĕмĕр тăршшĕпех ачасене вĕрентнĕ. Кил хуçи Килтĕш шкул тилхепине 11 çул тытса пынă. Çав вăхăтрах ачасене ӳкерме, йывăçран килте кирлĕ япала касса кăларма, станоксем ăсталама хăнăхтарнă. Унăн вĕрентекенĕсем конкурссенче, олимпиадăсенче палăрнă. Республикăра çĕнтерсе Мускава кайнă.

Çамрăксем сĕтел, алтăр, йĕтĕр... сутса инструментсем туяннă. «Ун чухне ачасем уроксем хыççăн ĕç пӳлĕмĕнчен тухма пĕлмен. Çĕнĕ хатĕр ăсталама ăнтăлатчĕç. Йăлтах кăсăклăччĕ вĕсемшĕн», – палăртать Николай Васильевич. Сăмах май, унăн мăнукĕ Сергей республика шайĕнчи «Çамрăк изобретатель» конкурсра мала тухнă. Унта, паллах, кукашшĕн витĕмĕ пур.

Йывăçран касса кăларнă пăши пуçне, тĕслĕхрен, Ландышевсем кухньăна вырнаçтарнă. Унăн мăйракинчен алшăлли çакса хума меллĕ.

Галина Петровна чăваш чĕлхипе литературине, тăван тăрăх культурине вĕрентнĕ. Улах, сурхури, туй, çăварни... йĕркине кăтартмашкăн ачасемпе пĕрле мĕн чухлĕ çи-пуç хатĕрленĕ, тухья тунă. Николай Васильевич тенкĕ касмашкăн ятарласах станок ăсталанă. Ун чухне консерв банкисене те пăрахман. Хатĕрĕсем çаплипех алă айĕнчех. Пĕр тăхтаса тăмасăр уяв пуçлама пулать.

Декрет отпускĕнче хĕрарăм Йӳçпан клубĕнче ĕçленĕ. «Çав тери хаваслă пурăннă. Пĕрре «Çитсă балĕ» те йĕркеленĕччĕ. Пусмана карусель майлă çакрăмăр. Вăйăсем ирттертĕмĕр. Çĕнтерӳçĕсене парнесем патăмăр. Ун чухне çамрăксемпе субботнике тăтăш пуçтаранаттăмăр. Тем тесен те культура вучахĕ çунни ял пурăннине пĕлтерет», – калаçăва тăсать çаврăнăçуллăскер.

### Пĕртен-пĕр ветеран

Галина Петровнăн ашшĕ Петр Андреев – 96 çулта. Çак тăрăхри Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин пĕртен-пĕр ветеранĕ Ландышевсем патĕнче пурăнать. Вăл та мана кăмăллă кĕтсе илчĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче Петр Андреевич санитар пулнă. Çапăçу хирĕнчен аманнисене йăтса тухнă, суранĕсене çыхса янă. Тăшман пульли ăна та шар кăтартнă. 9 уйăх госпитальте сиплеме тивнĕ унăн. Çав пульăна халĕ те упрать ветеран. Килтĕш каччи «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн» медале тивĕçнĕ.

Суранĕ шыçнине, пӳрленнине пула Петр Андреев киле таврăнсан та йĕркеллĕ çӳреймен. Çапах пурăнма ăнтăлнă. 1948 çулта Ефросинья Краснована качча илнĕ вăл. Вăрçă ветеранĕпе тыл ĕçченĕн çемйинче икĕ ывăлпа пĕр хĕр çуралнă. Мăшăрĕпе иккĕшĕ 48 çул килĕштерсе пурăнни – çывăх çыннисемшĕн, ял-йышшăн ырă тĕслĕх. Лазерпа Леонид çут тĕнчерен сарăмсăр уйрăлни ашшĕн чĕрине ыраттарса хăварни паллă. Халĕ хĕрĕпе кĕрӳшĕ лайăх пăхаççĕ ăна. Мăнукĕсем, мăнукĕсен ачисем хăнана пырсах тăраççĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Етĕрне районĕ.



АСТĂВĂМ

# «Кам парĕ ывăл, Яковлев пекки...»

**Юпа уйăхĕн 23-мĕшĕ – чăваш халăхне çутта кăларакан Аслă Вĕрентекенĕмĕр Иван Яковлев çут тĕнчерен уйрăлнă кун. Ĕнер ăна асăнма Шупашкарти И.Яковлев скверне учительсем, студентсемпе шкул ачисем, писательсемпе поэтсем, пултарулăх çыннисем пуçтарăнчĕç.**

«Вăл чăваш халăхĕшĕн тăрăшман пулсассăн, тен, «Нарспи» те çырăнмастчĕ, тен, Андриян Николаев та космоса вĕçейместчĕ? Вырăссем – пулăç ывăлĕ Михаил Ломоносов академик пулса тăнинчен, эпир тăлăх ача халăха ертсе пыма пултарнинчен тĕлĕнетпĕр» – терĕ митинга ертсе пынă май Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай.

ЧР культура министерствин ĕçченĕ Инна Ильина кашни халăхăн асран тухми çыннисем пурри çинчен каларĕ. Эпир Иван Яковлевăн халалĕсене пурнăçа кĕртсе пыратпăр. Çак кунсенче культура учрежденийĕсенче унăн ячĕпе мероприятисем йĕркеленине палăртрĕ Инна Ильинична.

Виссарион Пряников профессор Мускаври чăвашсен культура обществин ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Çĕршывăн тĕп хулинче тăван чĕлхене аталантарассишĕн тăрăшни куçкĕрет. Ентешсем Иван Яковлевичăн вилтăпри çине кайсах тăраççĕ. Нумаях пулмасть тăван тăрăха таврăннă профессор. Халĕ республикăри çамрăксене пĕлĕве тарăнлатма пулăшать.

Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев Кăнна Кушкинчи шкулта вĕренекенсен йышĕ чакса пынишĕн пăшăрханса каларĕ. 3-4 çул каялла 70-90 ача пĕлÿ илнĕ. Халĕ вара 9-ăн юлнă. «Кам парĕ ывăл, Яковлев пекки...» – Порфирий Васильевичăн сăвă йĕркисем асра юлчĕç.

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Михаил Краснов Иван Яковлевич çуралнă тăрăха нумай çынна илсе кайнă. Вăл та унти лару-тăрăва лайăх пĕлет. Ахальтен мар чăваш чĕлхине юратма чĕнсе каларĕ Михаил Николаевич.

Николай Григорьев экс-министр, çыравçă Иван Яковлевич чăваш ачисене юратни, вĕсене тÿлевсĕрех сиплени, апатлантарни, çĕр касма хăварни çинчен аса илчĕ.

Асăну кунĕнче çитĕнекен ăру вырăсланса пыни тавра та сăмах пуçарчĕç. «Эс кам ачи?» – тесен мĕнле хурав парĕç вĕсем?

Çав кун Иван Яковлевич çуралнă тăрăхра та, Тутарстанри Кăнна Кушкинче, асăну кунне халалланă мероприятисем йĕркеленĕ. Унта Чăваш Республикинчен сумлă делегаци тухса кайнă.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Василий Кузьмин сăнÿкерчĕкĕсем.





# Ялти кинофестиваль

Аслă Çĕнтерÿ 70 çул тултарнине тата Литература çулталăкне халалласа Чăваш Енре çак кунсенче литература хайлавĕсемпе ÿкернĕ фильмсен кинофестивалĕ уçăлнă. Ăна Чăваш патшалăх кинодокументаци тата электрон архивĕ пуçарнипе йĕркеленĕ. Киносене тÿлевсĕр ирттерме палăртнă. Çак кунсенче Етĕрнесем Ренат Давлетьяров режиссер ÿкернĕ «А зори здесь тихие» çĕнĕ ĕçпе паллашнă, хыççăнах «Единичка», «Мы все, не считая детей» илемлĕ фильмсене курнă. Юнкун фестиваль Муркашра иртнĕ. Çĕрпÿпе Элĕкре те киносем кăтартма палăртнă.

**Елена МИХАЙЛОВА.**

# «Кĕр парни» – пÿлме тулли

Чăваш Ен хулисенче «Кĕр парни» уйăхлăх çурла уйăхĕн 22-мĕшĕнчен тытăнса юпа уйăхĕн 16-мĕшĕччен пычĕ. Ăна кашни çулах хулара пурăнакансене йÿнĕ хакпа ялхуçалăхĕн паха продукцийĕпе тивĕçтерес тĕллевпе ирттереççĕ. Ярмăркkасем кăçал Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта, Улатăрта, Канашра, Сĕнтĕрвăрринче, Етĕрнере, Вăрнар поселокĕнче, Калинино салинче, халăх ытларах çÿрекен пĕтĕмпе 40 ытла лапамра, ĕçлерĕç.

Суту-илÿ пысăк лавккисемпе танлаштарсан вĕсем хайсен таварне 30 процент йÿнĕрех хакпа сутнă. Ялхуçалăх таварĕ туса кăларакан уйрăм çынсене, фермер хуçалăхĕсене, Чăвашпотребсоюз организацийĕсене, сад пĕрлешÿсене ярмăркkасенче вырăнпа тÿлевсĕр тивĕçтернĕ. Пур хулара та пенсионерсене, ветерансене тата сусăр çынсене туяннă тавара киле тÿлевсĕр леçсе панă.

**Елена ГЛУХОВА.**

# Йывăç кунĕ

Çĕмĕрлери 8-мĕш гимназире вĕренекенсем – çутçанталăкăн чи çывăх тусĕсем. Шкулти вĕренекенсем тăрăшнипе тăван тавралăха упрас, ăна май пур таран пуянлатас тĕллеве кĕçĕн класранах мала хураççĕ вĕренÿ çак учрежденийĕнче. Çĕмĕрлери вăрман хуçалăхĕн ĕçченĕсемпе пĕрле вĕсем Йывăç кунĕн кĕрхи тапхăрне хутшăннă.

Хайсене уйăрса панă лаптăкра шкул ачисем пурĕ 1500 чăрăш лартнă. Вăрман хуçалăхĕн директор çумĕ Д.Лаврентьев вĕренекенсене учреждени ĕçĕ-хĕлĕ, йывăçсене мĕнле упрани, çутçанталăкри тата çын пурнăçĕнчи вăрман пĕлтерĕшĕ пирки каласа кăтартнă, маттур та тăрăшуллă ачасене тав сăмахĕ каланă. 8-мĕш гимназире вĕренекенсем вĕренÿре те пысăк çитĕнÿсемпе палăраççĕ, шкул таврашĕнче йывăç-тĕм,тĕрлĕ чечек лартса ÿстерес ĕçе те кашни çулах хастар хутшăнаççĕ.

**Елена БАШКИРОВА.**

# "Юратман" кукамай

Шупашкарти Следстви управленийĕн следстви уйрăмĕ 23 çулти каччă тĕлĕшпе РФ УК 111 ст. 4 п. килĕшÿллĕн уголовлă ĕç пуçарнă. Шупашкар каччи кукамăшне тискеррĕн хĕненĕ. Ÿсĕрскер 83 çулти ватă патне пырса харкашма пуçланă. Унтан... хĕнесех тăкнă. Кинемей йывăр сурансене пула вырăнтах вилсе кайнă. Çамрăк вара тарса пытаннă. Çакă та паллă: мăнукĕ кукамăшне пĕрремĕш хутчен кÿрентермен – çывăх çыннине хĕненĕшĕн 2 çул кирпĕч шутлама ĕлкĕрнĕ вăл. Ирĕке кăçалхи çулла тухнăскер каллех тăванĕ çине алă çĕкленĕ.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Çĕр туртать чăваша хăй патне

**Елена АТАМАНОВА**

**Тĕрлĕ района час-часах тухса çÿретпĕр. Кирек хăш тăрăхалла кайсан та – тĕлĕнсе, çав вăхăтрах савăнса таврăнатăп хулана. Пĕри тепринчен лайăхрах пурăнма тăрăшать. Хăвăрт ÿссе, илемленсе пырать Чăваш Ен. Пĕр вунă çул каялла çеç-ха çамрăксем яла юлманнишĕн пăшăрханса калаçаттăмăр. Паян вара кермен пек çуртсем пĕри те тепри кăмпа евĕр ÿсеççĕ. Патшалăх çамрăк çемьесене тавăрса памалла мар субсидипе тивĕçтерет. Ятарлă ытти программăпа усă курни те яла аталанма пулăшать. Мĕн чухлĕ çĕнĕ урам, çемье хутшăнать чылай тăрăхра. Шăппăн тĕлĕрнĕ тăкăрлăксем каллех ача-пăча хаваслă сассипе тулни чунра савăнăç туйăмĕ çуратать.**

**Тавралăха хăтлăлатас, йывăç-тĕм лартса илем кÿрес тĕллевпе конкурссем те йĕркелеççĕ районсенче. Халь ялсенче кашнин килĕ умĕнчех тĕрлĕ чечек ешерет. Анчах та Çĕрпÿ районĕнчи Кăнар ял тăрăхĕнчи пеккине хальлĕхе урăх ниçта та курман. Унта кашни килрех тĕлĕнмелле илемлĕ, куçа йăмăхтаракан кĕлчечексем çитĕнтереççĕ. Ĕçлет чăваш халăхĕ, хитререн хитре пурăнма тăрăшать. Кил-çурчĕ çап-çутă, картишĕ тап-таса, пахчисенче çумкурăк тупаймастăн. Кил хуçи анкартинчи çÿп-çапа тислĕк купи çине хурса пырать, çунаканнине çунтарать.**

**Тĕрлĕ района тухса çÿренĕ май ыррине, лайăххине ытларах куратăп. Чăн та, çĕрпе кăвапапа çыхăннă чăваш. Патăрьел районĕнчи Çĕнĕ Ахпÿрт ялĕнче пĕрре мар пулса курнă. Тĕлĕнмелле ĕçчен халăх пурăнать ку тăрăхра. Кашни килрех вăрлăх сухан ÿстереççĕ, сурукунне ăна акман çын çук та пулĕ. Гектарĕ-гектарĕпе çитĕнтерсе Кавказ тăрăхнелле, кăнтăра ăсатаççĕ сухана. Тупăшне илмен тĕк ÿстерсе аппаланмĕччĕç.**

**«Пирĕн ялсем хуларинчен темиçе хут чаплăрах пурăнаççĕ. Çăвĕпех çĕр çинче чакаланаççĕ, вăрлăх сухан сутса ялта чаплă кермен хăпартаççĕ, комбайн-трактор, хулара хваттер туянаççĕ, машинăсене çĕнетсех тăраççĕ», – тенĕччĕ Çĕнĕ Ахпÿрт ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валентин Тукмаков. Хайсен вăйне, тăрăшулăхне пула ыттисенчен уйрăларах тăраççĕ ку тăрăхри чăвашсем. Çимĕçе ÿстерме çеç мар, ăна вырнаçтарма та пĕлмелле-çке. Апла çаврăнăçулăх та кирлĕ. Тăнăçлăхпа чыс-хисепе вĕсем ĕçченлĕхне тата хастарлăхне кура çĕнсе илеççĕ.**

**«Пирĕн енчи халăх çавнашкал, пĕри тепринчен тăрса юласшăн мар. Эпир çĕнĕ хапха туянтăмăр, кÿршĕсем пирĕнтен хитререхине вырнаçтарчĕç. Хирĕççисем пире курса тата та хаклăраххине саккас пачĕç. Пĕри тепринпе ăмăртни япăх мар, çын лайăххи патне ăнтăлать-çке, урам тăрăх эрех ĕçсе çÿрени мар», – каласа кăтартать пĕрле вĕреннĕ тантăшăм.**

**Хаçат çырăнтарас ыйтупа çуркунне Елчĕк тăрăхĕнчи Тÿскел ялне çитсе килнĕччĕ. Пĕччен кинемисем те икĕ хутлă, тĕлĕнмелле чаплă керменсенче пурăнаççĕ ку ялта! Шалта – çĕнĕ йышши хаклă сĕтел-пукан, хитре юсав, душ-туалет... «Ачасем çурт хăпартса пачĕç, хăйсем хальлĕхе яла килесшĕн мар», – теççĕ. Ывăлĕсем амăшĕсене çакнашкал условире пурăнтарнăшăн, хисеп тунăшăн епле хĕпĕртемĕн?**

**Етĕрне тăрăхĕнчи Мăн Пакăшри Ивановсем, Елчĕк районĕнчи Элпуçри Захаровсем, асăннă районти Кĕçĕн Таяпари Головинсем пек çемьесем пурри савăнтарать. Йывăрлăхран хăрамасăр, ыйхă пирки шухăшламасăр вун-вун ĕне-вăкăр, картиш тулли сысна, пĕр кĕтÿ сурăх тытаççĕ вĕсем. Ивановсен çемйи Пĕтĕм Раççейри «Ылтăн кĕркунне-2013» агропромышленноç 15-мĕш куравне хутшăнса «Чи лайăх хушма хуçалăх» номинацире çĕнтернĕ.**

**Нумайăшĕ чăваш пĕтесси, ялсенче пушă çуртсем кăна тăрса юласси çинчен калаçать. Ĕненес килмест çак усал шухăша. Хăш-пĕр регионшăн, чăн та, кăтартуллă ку – хăмапа çапса тухнă тăлăх чÿречеллĕ пушă çуртсем, мăян-пиçен ашкăракан урамсем... Анчах чăваш ялĕнчен ку мур айккинчен иртсе кайтăр. Хуларан яла таврăнакан сахал мар – пушă килсене сыхласа кăна тăраççĕ, сутас пулсан пĕлĕшсемех туянма васкаççĕ. Ял пĕтни курăнмасть-ха, унта халĕ те вăй тапса тăни палăрать.**

**Туртать çĕр хăй патне чăваша, туртать. Ĕçченлĕхне кура тăрантарать ăна, тумлантарать, тупăш та кÿрет, малалла аталанма вăй-хăват хушать. Пурăнатпăр-ха апла пулсан.**

ÇĔНĔЛĔХ

# Тӳлев – процентсăр



2014 çулхи раштав уйăхĕнчен пуçласа республикăри нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакасен коммуналлă тепĕр тӳлев хушăнчĕ – капиталлă юсавшăн. Тĕрлĕрен йышăнчĕ ăна халăх. Ун тавра пуçарнă калаçу, тĕрĕссипе, паян та лăпланмасть-ха.

Çак эрнере ЧР строительство, архитектура тата коммуналлă хуçалăх министерстви журналистсем валли ирттернĕ брифингра та калаçу ун пиркиех пулчĕ.

Министр çумĕ Александр Герасимов пĕлтернĕ тăрăх, республикăра 2008 çултанпа нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсас программа пурнăçланать. Унта коммуналлă хуçалăха реформăлас енĕпе ĕçлекен /Фонд содействия/ фонд та хутшăнать. Çак тĕллевсемпех 2008-2013 çулсенче тĕрлĕ çăлкуçран 3014,6 млн тенкĕпе усă курса 1416 нумай хваттерлĕ çурта – 3,7 млн тăваткал метр – юсанă. Вĕсенче 189,8 пин çын пурăнать.

Республикăра юсав ĕçĕсем ирттерме 30 çуллăх программа /2014-2043 çç./ та йышăннă. Унпа килĕшӳллĕн 4732 нумай хваттерлĕ çурта юсамалла. Вĕсенче 618 пин çын пурăнать. 2014 тата 2015 çулсенче юсамалли çуртсен шучĕ вара 281-пе танлашать.

«Капиталлă юсав фончĕн» генеральнăй директорĕ Олимпиада Епифанова пĕлтернĕ тăрăх, уйăхсерен çынсене 66 млн тенкĕ шутласа параççĕ. Анчах пурте тӳлемеççĕ ăна. Авăн уйăхĕнче, сăмахран, квитанцисене халăхăн 63,2 проценчĕ тӳленĕ.

– Тӳлеве 81 процент пурнăçлани те пулнă. Фонд пурлăхĕ те ӳссех пырать. Юпа уйăхĕн 10-мĕшĕ тĕлне унта 331,575 млн тенкĕ пухăннă. 601 млн тенкĕ шутласа панă, – терĕ Олимпиада Ивановна.

Малашне юсав ĕçĕ валли уйăракан укçана процентсăрах хывма май пулĕ. Ку тĕллевпе Перекет банкĕпе ятарлă килĕшӳ тунă.

– Çынсене ырă хыпарпа савăнтарар терĕмĕр. Процент илнипе эпир пуяс çук. Çынсемшĕн вара ку кăмăллă çеç, – терĕ Перекет банкĕн Чăваш Енри уйрăмĕн ертӳçи Юрий Бычковский.

Халăха меллĕрех пултăр тесе капиталлă юсавшăн пичетлекен квитанци малашне уйрăм хутпа мар, коммуналлă хуçалăхшăн тӳлемеллипе пĕрле килĕ. Ку та – çĕнĕлĕх. Хулари хăш-пĕр ертсе пыракан компанисем ку ĕçе пуçăннă та ĕнтĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

ПĔР КУН

# Хĕлимуна тав тăвасшăн...

Пуртă хĕстерсе урама тухнăччĕ. Тупăнать вĕт çĕнетмелли... Ванюш пралукĕнче тулли сăнпитлĕ Хĕлимун курăнчĕ. Кхм! кхм! ӳсĕркелет хăй. Пĕр-пĕрне сывлăх суннăмăр, чăвашсен йăли-йĕркипе алă тытрăмăр.

Ял лавккине васкать-мĕн хулăн саслă Хĕлимун. Çăкăр туянасшăн, тăвар та пĕтсе çитнĕ.

– Эреçук, карти-хурипе кайран та аппаланăн. Вашлаттар халех... – куçне ăмăртмалла мăчлаттарчĕ Хĕлимун. – Ăнланмарăн-им?..

Тарлă, сарлака çамкине фуфайка çаннипе шăлса илчĕ арçын. Хăй тăруках аллипе тăвалла кăтартрĕ. Тепĕр хут çине-çинех кхмлатрĕ те тăвалла ярса пусрĕ.

Хĕлимун Пăрамуна асăрханă иккен. Пĕчĕкрех çан-çурăмлă арçын хулпуççи çине тулли михĕ çавăрса хунă та пуçа пĕксе малаллах таплаттарать. Аллă урлă каçнă Хĕлимун хăвăртах хăваласа çитрĕ ăна.

– Эреçука та хушрăм-ха эпĕ. Вашлаттар халех ... – çиле май хăлхана хулăн сасă хупларĕ. – Ăнланчĕ курăнать.

Ăнлантăм паллах... Тулта юпа уйăхĕ хуçаланать пулин те ял садĕнчен панулми сĕтĕрет Пăрамун. Хĕл хырăмĕ аслă-çке, пурри пăсмасть.

Хĕлимун та унта çаврăнса тухнă ав... Тур калашле, виçĕ михĕ çĕклесе таврăннă.

Эпĕ те туххăмрах сад пахчине çитрĕм. «Эх, улми, панулми», – юрласа ятăм савăннипе. Ара, чăннипех те ырлăх-пурлăх йăванать-çке кунта... Улмуççи тавралĕнче, пăрса сапнă евĕр, панулми выртать. Çулçăсемпе хупланнăран сивĕ пăркăчлайман-ха вĕсене... Йывăç тураттисем çинчисем шăнса пăрланнă вара... Пустăр, силле кăна...

Эпĕ çеç хуçа мар-мĕн садра. Манран ултă-çичĕ утăмра Мĕтрипе Васук тата пĕчĕкрех питкуçлă Васук тăхлач упаленсех ĕçлеççĕ, панулмие михсене «хăвалаççĕ». Эпĕ те пĕр михĕ тултарса таврăнтăм.

– Ай, лайăх, – тет паян та арăм. – Ӳркенменни аван...

Тĕрĕсех. Пылак шыв та ытлă-çитлĕ халĕ. Типĕтнĕ панулми те хутаç туллиех.

Хам вара сада çул кăтартнăшăн хулăн саслă Хĕлимуна тав тăвасшăн...

**Георгий ЕФИМОВ.**

# Укçан ăшши çук

Каç пулать... Кăвак çут килет. Йăли-йĕркипе ĕçе вăхăтра çитмелле... Васкавлăн хыпăнатăн вара çула... Ялти «Дарья» лавкка умне пухăнатпăр ирпе. Паян та çаплах... Антун, Пăрамун пур пĕчĕк йышра. Лавккаран леререхре, клуб умĕнче, çерçи пасарĕ евĕр, шкул ачисем пухăннă. Вĕсене вĕрентӳ кунĕсенче чăпар чăх тĕслĕ автобус илсе каять тата леçсе хăварать. Кăмăллă водитель ачасен...

– Пирĕн Володь пичче тăрăшуллă çын. Пире кӳрентермест... Шурă куçпа пăхмасть вăл, – мухтаççĕ ăна кĕçĕн тусĕсем. – Тавах Володь пиччене...

Вăйпитти сахал мар ялта. Вĕсем кашниех телейĕшĕн çунаççĕ. Телейĕ вара ĕçре çуралать, хĕрӳллĕн туптанать. Шел те, туриншĕн та юратнă ĕç çукрах çав ялта. Пултаруллисем, шыраврисем тупаççĕ ăна... Çавсемех куллен район центрне çул тытаççĕ. Кам – «ГАЗельпе», тепри харпăр хăй машинипе васкать. Ĕçлĕ кунсенче «Дарья» лавкка умĕнче пĕри те тепри машина кĕтет. Çула май, ăшпиллĕ водитель пулсан, вăштах ларса каять. Акă Антунпа Пăрамун та туххăмрах куçран çухалчĕç.

Кĕçех, вĕсен хыççăнах, тĕксĕмрех шурă тĕслĕ «Жигули» чарăнчĕ. Руль умĕнче типшĕмрех сăнпитлĕ çырă çӳçлĕ арçын ларать.

– Кайрăмăр, Юркка пичче... – терĕ вăл машинăна чарса. – Кăмăллă çынна алă çĕклемесĕрех лартатăп эпĕ.

Ялти пек каласан, Емельян пулчĕ ку. Шаков хушаматлăскер. Ашшĕ ячĕпе – Леонидович. Çав тери вашават çамрăк. Хăйпе юнашарах юратнă мăшăрне вырнаçтарнă вăл. Манпа çумма-çумман унăн юратнă хĕрĕ йăл кулăпа сăмахлать.

Иккĕшĕ те – амăшĕпе хĕрĕ – Упире анса юлчĕç. Пĕри «Шуракăш» ясли-садикре ĕçлет, тепри вăтам шкулта пĕлӳ пухать. Вашават мăшăрĕпе, ачисемпе Емельян...

Çул кĕскелтĕр тесех пуль иксĕмĕр хушăра калаçу сыпăнчĕ, арçын хăй тăрăшакан предприяти ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ.

Çул çинче чăмăркка çан-çурăмлă тулли сумкăллă хĕрарăм алă çĕклерĕ. Тиевĕ йывăр иккен. Сăн-пичĕ пиçсе çитнĕ палан евĕр çуталать хăйĕн.

– Фу! – лăштах вырнаçрĕ хăй. – Тавах!.. Çавăнтах çепĕç аллине Емельян енне ывăтрĕ. Çул укçи сĕнет, паллах...

– Сире хам кăмăлпа лартрăм. Алă çĕклени шутра мар кунта. Чун-чĕре ăшши пултăр пирĕн... – терĕ Емельян. – Укçан ăшши çук, чун-чĕрен ăшши пурах...

**Георгий ТУСЛИ.**

**ХИСЕП ХĂМИ**
**• Зинаида Ивановна БОГАТЫРЕВА, 1938 çулта çуралнă. Етĕрне районĕнчи Советски ялĕ.**
**• Нина Павловна НИКОЛАЕВА, 1944 çулта çуралнă. Етĕрне районĕнчи Моляк ялĕ.**

*«Хисеп хăмине» пирĕн хаçата нумай çул çырăнса илекенсен хушамачĕсене вырнаçтаратпăр. Сирĕн хушăра ун пеккисем пулсан, тархасшăн, пĕлтерĕр. Паянхи «Хисеп хăминчи» хĕрарăмсем пирĕн хаçата мĕн тухма пуçланăранпах çырăнса илеççĕ. Питĕ пысăк тав вĕсене уншăн. «Хисеп хăмине» лекнĕ ушкăн ӳссех пырасса шанатпăр.*

ÇĔР ЫЙТĂВĔ

# Варрине юсаççĕ, хĕррине пăсаççĕ. Мĕн ку?

Çулсем япăххи, паллах, вĕчĕрхентерет. Анчавах вĕсене юсама пуçласан та кăмăлсăрланмалли тупăнать. Çулсем йĕркене кĕрсе пыраççĕ, анчах та хăш-пĕр чухне икĕ айккипе выртакан çĕрсем япăхса каяççĕ. Çакăн пирки лаптăкĕ шар курнă хуçисем те, çĕр пахалăхĕшĕн çунакан çынсем те евитлеççĕ тивĕçлĕ органсене.

### Çĕр пулăхлăхне хăçан тавăрĕç-ши?

Акă кăçал Етĕрне районĕнчи Иванькково ял тăрăхĕнчи ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрĕн паха сийне пĕтерни пирки пĕлтерчĕ Россельхознадзора пĕр арçын. Хăй сăмахне видеоматериалпа çирĕплетнĕ вăл. Унăн лаптăкĕпе юнашар «М-7 Атăл» çула юсаса çĕнетнĕ. Анчах та ятарлă техника унăн лаптăкĕ урлă çӳренĕ, çавăнтах стройматериалсене те тăкнă та, тиенĕ те. Вĕсене тиесе кайнă хыççăн строительство каяшĕ тăрса юлнă, вĕсем вара лаптăка варалаççĕ. Пулăхлă сий хăйăрпа, тăмпа, вĕтĕ чулпа тата ытти япалапа хутăшса кайнă.

Лару-тăрăва тĕпчеме инспекторсем вырăна тухнă. Чăнах та, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çав çĕр çинче тимĕр-бетон плитисем те, 4 метр çуллĕш тăмпа вĕтĕ чул хутăшĕ те, строительство çӳп-çапĕ те выртнă. Паллах, мĕнле çĕр чăттăр кун пеккине – вăл лапчăннă та хытнă. Шар курнă лаптăк – 1,71 гектар. Стройматериалсен юлашкийĕсене пула пулăхлă сий пĕтнĕ тесен те юрать.

Вырăн-вырăнпа культуралла ӳсен-тăран курăннă, эппин, строительство ĕçĕсем пуçланиччен унта нумай çул ӳсекен курăк лартса ӳстернĕ. Анчах та халĕ лаптăк сухаласа акма юрăхсăр, ял хуçалăх культурисене ӳстерме май çук унта.

Ял çыннин лаптăкне строительство материалĕсен тăкма ирĕк паракан документсем кăтартайман çул-йĕре юсакан общество. Рекультиваци проекчĕ те çук.

Общество директорĕ вара шăпах рекультиваци ĕçĕсем ирттерме шантаракан çырăва алă пуснă ĕçсене 2014 çулхи пĕремĕш кварталтах пурнăçламалла пулнă. Анчах та инспекторсем çитнĕ кун та /кăçалхи çу уйăхĕ/ шантарнине пурнăçламан. Тен, административлă майпа явап тыттарни шантарнине пурнăçлама аса илтерĕ те, хистĕ те.

### Кама ĕненмелле тата айăпламалла?

Çĕр надзорĕн пайĕн инспекторĕсен опычĕпе паллашнă май çапла ыйтас килет. Чăнах та, нумай чухне çĕр пахалăхĕшĕн пăшăрханни çăхав çырма хистет. Çулсем сарнă е юсанă май сывăхри çĕрсене япăхлатнă тĕслĕх пĕрре-иккĕ кăна тĕл пулмасть. Кунашкал йĕркесĕрлĕхпе кашни çулах кĕрешме тивет.

Анчах та хăш-пĕр чухне çăхав çыракан çынпа та /ытларах чухне вăл çĕр хуçи хăех/ хыттăнрах калаçма тивет. Шупашкар район хĕрарăмне хăйнех яваплăх пирки аса илтермелле пулса тухнă административлă тĕпчев ирттернĕ хыççăн. Пĕр общество çул тунă чухне унăн лаптăкĕнчи çĕре тăмпа пăтратса янă тесе çырнă вăл. Анчах та çырура çырнă пек «пулăхлă сийе хăйсен тĕллĕн вырăнтан тапратнă, хырса илнĕ» тени çирĕпленеймен.

Çăхавра çырса кăтартнă йĕркесĕрлĕхсем çирĕпленмен пулин те, унта çĕрпе усă курассипе çыхăннă саккунсене пăснă самант пурах. Ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе тĕллевлĕн усă курманни яр-уççăн палăрнă – сухаламан, акман-лартман. «Çĕр ĕçĕсене пула япăхланса кайнă лаптăкпа усă курма май килмест» тесе тӳрре тухма тăрăшнă вара хуçи.

Административлă тепĕр тĕпчев пĕтĕмлетĕвĕ те çакăн пекрех. Ку хутĕнче те çул хывнă май çĕр вĕтĕ чулпа хутăшса кайнă тесе евитленĕ Çĕрпӳ çынни. Анчах та явап тыттарма каллех сăлтав тупăнман.

Шупашкар районĕнче арçын вара çĕр ыйтăвĕпе ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ суйлавçăсемпе тĕл пулнă чухне тапратнă. Пĕр общество ун лаптăкĕ тăрăх çул-йĕр хывнипе кăмăлсăрланнине палăртнă вăл. Ку ыйтупа административлă тĕпчев йĕркеленĕ Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн инспекторĕсем – ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр пирки сăмах пырать-çке-ха. Анчах та унăн лаптăкĕ çинче çул тунине тата унти тăпра пахалăхĕ чакнине çирĕплетекен самантсем тупайман.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА, управлени ĕçченĕ.**

ХАСТАРРИСЕМ

# Кĕтерукăн тус нумай




**Чылайăшĕ ялта ĕç çукран хулана туртăнать. Хастаррисем, маттурисем вара ниçта та аптăрамаççĕ. Тăвай районĕнчи Турикас Тушкил ялĕнче пурăнакан Николайпа Екатерина Георгиевсем те çаплах. Кил хуçи пĕр вырăнта лармасть: е аякри хулана каять, е ялта та тракторпа ĕçлемелли тупăнать. Мăшăрĕ Катя малтанах ялти хуçалăхра тăрăшнă, вăл аркансан – хресчен-фермер хуçалăхĕнче. Халĕ вара Тăвайри пĕр предприятире ĕне сăвать хĕрарăм.**

Екатерина хăйĕн ĕçне тăрăшса пурнăçланине ĕçри çитĕнĕвĕсем те çирĕплетеççĕ. Ахальтен-и вăл 2010 çулта республикăра ĕне сăвакан çамрăксен йышĕнче 1-мĕш вырăн йышăннă. 2013 çулта ку енĕпе Чăваш Енре хĕрарăмсен йышĕнчен 3-мĕш вырăна тухнă. 2014 çулта вара каллех çĕнтернĕ – 1-мĕш вырăн йышăннă. Кăçал вара çамрăк хĕрарăма республика чысне Раççей шайĕнче хӳтĕлеме шаннă. Ку ăмăртуран вăл тăваттăмĕш вырăнпа таврăнчĕ. Конкурсра теори ыйтăвĕсене хуравлама, аппарата сӳтсе пуçтарма, ĕне сума тивнĕ. Унта Раççейри 54 регионти доярка тупăшнă.

– Ĕне сунă чухне йĕркене тĕрĕс пăхăннине, ĕç пахалăхне хаклаççĕ ăмăртура. Аппарата, паллах, вăхăтпа пуçтармалла. Теори ыйтăвĕсем те пĕтĕмпех выльăхпа çыхăннă – ĕне сăвассин вăрттăнлăхĕсем, тĕрлĕ чир-чĕр тавра, – тет ăмăртăва 13-мĕш номерпе хутшăннăскер. – Ларатпăр жеребьевкăра. 13-мĕш номер тухмасть те тухмасть. «Манах лекет ĕнтĕ», – шухăшлатăп ăшăмра. Чăн та, çаплах пулчĕ. Куншăн хăрамарăм та, кулянмарăм та. Каяс умĕн çеç пăлхантăм. Пĕрремĕш вырăнсăр таврăнма хушманччĕ-ха та... Маншăн 56 çын хушшинче тăваттăмĕш пулни те паха. Хутшăнни мĕне тăрать! Çывăх çынсем те çитĕнӳпе кăмăллă, – кăмăлне уçать Екатерина. Май пулсан кун пек конкурссенчен малашне те пăрăнмасса систерет.

Çак ялтах çуралса ӳснĕскер вырăнти каччăпах çемье çавăрнă хĕрарăм. Катя хальлĕхе çапçамрăк-ха, 24 çулта çеç, апла пулин те мăшăр икĕ хĕр çитĕнтерет. 6 çулти Кристинăпа 5 çулти Ксюша ача садне çӳреççĕ. Амăшĕ икĕ кун килте, икĕ кун ĕçре пулнине вĕсем хăнăхнă ĕнтĕ.

Ял çынни выльăхсăр епле пурăнтăр-ха? Георгиевсен те çаплах. Сăвăнакан икĕ ĕнепе пĕр вăкăр тытаççĕ. Вĕсене хĕл касарма вара çулла утă-улăм сахал мар хатĕрлемелле. Чăххи-чĕппи те картиш тулли.

2008 çулта пĕрлешнĕ çамрăксем. Виçĕ çул каялла йывăç пӳрт туянса уйрăлса тухнă. Çурта юсаса çĕнетме ял тăрăхĕнче черете те тăнă. Çавăнпах кăçал патшалăхран пĕчĕк пулăшăва тивĕçнĕ. Кун валли малтанах пулас çурт проектне хатĕрленĕ, вăл мĕн хака ларасса шутласа кăларнă. Ара, шăпах ăна шута илсе тăкаксен 30 процентне саплаштараççĕ-çке. Ялти çамрăксене пулăшмалли програмăпа тивĕçнĕ укçапа, амăшĕн капиталĕпе усă курса çурта пысăклатнă. Анчах строительство ĕçĕ пĕтмен-ха. Вĕсене вĕçлесен çемьене пурăнма тата та хăтлăланĕ.

Екатерина ĕне-пăрупа ĕçлеме кăмăлланинче чи çывăх тăванĕсен витĕмĕ те пурах-тăр. Амăшĕ Людмила Николаевна ялти хуçалăхра лаборанткăра тăрăшнă. Халĕ те хĕрĕпе пĕр вырăнтах пăру пăхать. Ашшĕ Геннадий Николаевич унччен те, халĕ те зоотехникре вăй хурать. Пĕчĕкренех вĕсен ĕçне курсатуйса ӳснĕ Катя. Аслă хĕрĕ ялтах пурăнни ашшĕпе амăшне те савăнтарать. Пĕр-пĕрне хăть те мĕнле ĕçре те пулăшаççĕ тăвансем.

– Килте ĕне пулсан та аттеанне патне фермăна каяттăмăр. Интереслĕччĕ унта: выльăх нумай-çке, – пытармасть Катя.

Унпа тĕл пулнă хыççăн ача чухнех вĕреннĕ сăвă аса килчĕ. «Ферма тулли пăрусем: чăпаррисем, улисем – Кĕтерукăн тусĕсем», – вĕрентетчĕ анне. Чăн та, пирĕн Кĕтерукăн та фермăра тус нумай: пăрăвĕсем те, ĕнисем те.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

АНАТАЛЛА-ТĂВАЛЛА

# Йăмраллă ялта, Çĕнĕ Шуртанра...

**Историрен çакă паллă, Канаш тăрăхĕнчи Çĕнĕ Шуртана Вăрнар районĕнчи Кивĕ Шуртанран 1858 çулта чи малтан Яков Савельев куçса килнĕ. Юманлăх варрине, юханшыв хĕрринчи пыллăх ĕшнине, çурт лартнă вăл. Аякрах мар пысăк утар пулнă. Ял варринче тӳпенелле кармашакан мăнаçлă тăвата юман паянхи кунччenех сыхланса юлнă. Йăмраллă Çĕнĕ Шуртан темшĕн мана ĕлĕкхи чăваш ялне аса илтерет. Каярахпа вăрманлă çак тăрăха ытараймасăр Вăрнар районĕнчи Иккĕмĕш Хурамалтан, Хурамалтан, Ямашран та куçса ларнă. Янкăлч ял тăрăхне кĕрекен Шуртан Вăрнар, Йĕпреç районĕсемпе чикĕленет. Çур çухрăмранах Çиçĕмкасси /Йĕпреç районĕ/ пуçланать. Вăрçă вăхăтĕнче, 1943-45 çулсенче, кунта аэродром пулнă-мĕн. Блиндаж ишĕлчĕкĕсем яла килсе кĕнĕ çĕрте, сулахай енче, халĕ те упранса юлнă.**

## Çулĕ пур та...

Паянхи кун Çĕнĕ Шуртанра 32 кил шутланса тăрать. Тепĕр 14 çурчĕпе дача вырăнне усă кураççĕ. Пĕтĕмпе ку ялта 70 çын пурăнать. Лавкка çук, медпункт та ĕçлемест. Темиçе çул каялла кĕрлесе тăнă клуба та хупнă халь, унран «прокат лапамĕ» туса хунăмĕн. Шел те, пухусенче, ял уявĕсенче те кунта пысăк çăра çакăнса тăрать.

Пĕтĕмĕшле илсен, Çĕнĕ Шуртанра пурăнакансенчен ытларахăшĕ – ватăсем. Вĕсене, паллах, кирек хăш вăхăтра пулăшу кирлĕ. Çывăхри медпункта çитес тесен 4 километрти Пукăртана утма тивет. «Юрать, медсестра питĕ ĕçчен те маттур, çумăр çăвать-и, çилтăман алхасать-и, чĕнсен çанталăка пăхмасăр кирек хăш вăхăтра вĕçтерсе çитет», – терĕç урама уçăлма тухса ларнă кинемисем. Паллах, ĕç вырăнĕ те çук ку ялта, арçынсенчен чылайăшĕ Мускавра тар тăкать. Çĕнĕ Шуртансем каланă тăрăх, уйăхне 30-40 пин тенкĕ ĕçлесе илеççĕ те çав укçапа пĕр уйăх тăранкаласа пурăнаççĕ, кайран каллех кутамкка çакса аякри çула тухаççĕ. Ĕне усракан та çук ялта. Выльăх тытманран ĕлĕкхи пек касу та çӳремест. Юрать, 1980 çулсенче Çĕнĕ Шуртана çитме асфальт çул хывнă. Янкăлч ял тăрăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Анатолий Кротов тăрăшнипе икĕ-виçĕ çул каялла ял урамне тăршшĕпех хытă çул сарнă. Маларах пылчăк çăрăлнă-мĕн, машинăсемпе кĕрлĕ-çурлă кĕрсе тухма та май пулман.

## Ĕçе хăвалакан çук

– Ĕлĕкхи пек ир-ирех бригадир вăратмасть, никам та ĕçе хăваламасть паян. Хăть кунĕпе çывăр, вăрçакан çук, çăтмахри пекех туятпăр хамăра. Вăрманта çырли-кăмпи те туллиех, вутти те, утти те нумай, хатĕрлеме ан ӳркен çеç, – теççĕ Çĕнĕ Шуртансем. Шахвăртса калани, чунран пăшăрханни вара тунсăхлă куçĕсенче çав-çавах сисĕнет. Вăрман шăпи кулянтарать ялта тĕпленнисене. Унта ĕлĕкхи пек мар халь, вутă-шанкă йăтăнса выртать, ниепле кĕрсе тухма çукмĕн. «Кăвак çулăма» икĕ-виçĕ çула сӳнтермелле, вара, тен, вăрман та тасалĕччĕ, çатма пекех çуталĕччĕ. Унсăрăн часах джунглие çаврăнать», – шӳтлет çутçанталăк тусĕ Виталий Дмитриев. Вăл каланă тăрăх, юлашки вăхăтра тилĕсемпе хир сыснисем, хир качакисем нумайланнă Çĕнĕ Шуртан вăрманĕнче. «Хамăра тапăнма пуçламĕç-и хир сыснисем, кашни кунах куратпăр, ял çумĕнче кĕтĕвĕпех çӳреççĕ», – тет вăл. Темиçе çул каялла тилĕсем витери 42 чăхха тытса кайнă, пĕр автанĕ çеç темле майпа сыхланса юлнă. Çирĕп хуçалăх тытса тăрать Виталий Кузьмич. Икĕ лаша, 60 ытла сурăх унăн паян. Картиш тулли – чăх-чĕп, хур-кăвакал. Пахчинче çĕнĕ йышши мунча купалама тытăннă. Алли тĕлĕнмелле çыпăçуллă. Çемье, кил, ача-пăча, тăвансем пурнăçра уншăн чи пысăк вырăн йышăнаççĕ. Нумай пулмасть район депутатне суйланнă вăл. Виталий Кузьмич – Вăтакас Татмăшри культура çурчĕн пуçлăхĕ. Çав вăхăтрах ку ялти вăтам шкулта «Укăлча» фольклор ушкăнне ертсе пырать. Катекри шкула çитсе музыка пĕлĕвĕ пама та ĕлкĕрет. Вăтакас Татмăшри культура çурчĕ кĕрлесе кăна тăрать паян. Хăюллăнах «Виталий Кузьмич пуррипе» тесе калас килет.



## Вучаха сӳнтерес килменнипе

Çĕнĕ Шуртанра чи асли – 91 çулти Домна Андреева. Вăрнар районĕнчи Тимĕрчкассинчен качча килнĕ вăл кунта. 7 ача çуратса ӳстернĕскер паян пĕчченех пурăнать. Вăрçă нушине самаях активнĕскер хăйĕн çирĕплĕхĕнчен хăй те тĕлĕнет. «Нушине те куртăмăр, темĕн те чăтрăмăр. Ялти мĕнпур йывăр ĕç хĕрсемпе хĕрарăмсем çине тиенчĕ. Вăрман та нумай пулăшрĕ пуль пире, юр кайса пĕтсенех утнă унта, курăкпа тăранса пурăннă. Çут тĕнче тĕлĕнмелле хитре-çке, халех пăрахса каяс килмест кунтан», – сăмах çăмхине сӳтет ăш пиллĕ Домна Петровна. Ачисем пĕччен пурăнтарасшăн мар-ха ăна. «Килтех лайăх, кăмака пур, ăшă, темĕн тума пĕлмелле ывăлхĕр патĕнче, вĕсем çамрăкла, эпир ватăлла...» – хирĕçлет вĕсене Тоня аппа. Ытти çул Канашри хĕрĕ патĕнче пурăннăскер кăçал хĕл кунĕсене те тăван ялтах ирттересшĕн. Ачисене кӳреннипе мар, килти вучаха сӳнтерес килменнипе. Вуттине те çителĕклĕ хатĕрленĕ кинеми.

Ялти ырă та ăшă кăмăллă, чунĕпе тĕлĕнмелле пуян Анна Кротовăна ниепле те асăнса хăвармасăр май çук. «Вăрçă пуçланнă çулсенче çамрăк пулнă эпĕ, 9 çулта çеç. Вăрçа-вăрçах ĕçлеттернĕ пире, кĕлте те йăтнă, çум çумланă. Ачалăх пулман пирĕн», – йывăр çулсене аса илет Анна аппа. Ял историне, аваллăха, чăваш халăх йăли-йĕркине аван пĕлет, ĕлĕкхине лайăх астăвать вăл.

Çĕнĕ Шуртанра чи кĕçĕнни – çулталăкран каçнă Семен. Ку ялтан шкула çӳрекен те пĕр ача çеç. Света Кузнецова халь Вăтакас Татмăшри вăтам шкулта 7-мĕш класра пĕлӳ пухать.

«Халь хăть пĕр вĕренекен пур-ха. Уншăнах автобус та килсе çӳрет. Тепĕр вунă çултан Çĕнĕ Шуртанран шкула каякан пачах та пулмасть...» – терĕç сывпуллашнă май ялти ватăсем.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА октябрь, 26-ноябрь, 1

## 26 тунтикун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
9.20, 4.25 «Контрольная закупка»
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Сегодня вечером» 16+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ПАЛАЧ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Познер» 16+
1.15, 3.05 Х/ф «ЛЕДИ УДАЧА» 12+
3.35 Т/с «ВЕГАС» 16+

### РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
11.00 "Это моя семья" 12+
11.30 "Çапла пултăр!" 12+
12.30 "Г. Лебедев çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май "Чăваш патшалăх академи юрăпа паша ансамблĕ" 12+
15.00 Х/ф "КАМЕННЫЙ ЦВЕТОК" 6+
17.30 "Сделано в Чувашии" 12+
17.35 "Спорт для всех" 12+
18.00 "Бумеранг" 12+
18.30 "Зажги" 12+
19.00 "Об этом подробнее" 12+
19.10 "Правительственная связь" 12+
20.00 "Законодатели" 12+
20.30 "Çĕр тивлечĕ" 12+
21.00 Х/ф "О ЧЕМ МОЛЧАТ ДЕВУШКИ" 12+
23.00 Х/ф "ЯРКАЯ ЗВЕЗДА" 12+

### Чăваш Наци радиовĕ

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 10.05-10.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30 Юрă вăчăри. (12+)
6.30-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+)
7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+)
8.05-8.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+)
8.30-9.00 Присягая Родине. (12+)
9.30-10.00 Шурăмпуç. (12+)
10.00-11.30 Чаплă туй. (12+)
11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+)
12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+)
14.05-15.00 Радиотеатр. (12+)
15.30-16.00 Голос Республики. (12+)
16.30-17.00 Путь к здоровью. (12+)
17.10-18.00 Çиларман-шоу. (12+)
18.30-19.00 Ялтан яла. (12+)
19.00-20.00 Янра, юрă! (хит-парад) (12+).
20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

### Чăваш радиовĕ

7.10 Анонс передач
7.17 Паянхи кун
7.21 Столичный курьер
7.34 Здоровье
7.44 Çыравçăсем – ачасем валли
7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ

* * *

8.00-9.00 Между Волгой и Уралом

* * *

12.10-13.00 Кайри – мала. Хит-парад

* * *

18.10-19.00 Ылтăн çӳпçерен



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



**Çĕрулмипе рис катлечĕ**

**500 грамм çĕрулми, 1/2 стакан рис, 2 çăмарта, 2-3 апат кашăкĕ тăпăрч, пуçлă 2 сухан, петрушка, тăвар кирлĕ.**

Çĕрулмие, сухана теркăламалла. Риса пĕçермелле. Çĕрулмие риспа, çăмартапа, суханпа, вĕтетнĕ петрушкăпа пăтратмалла, тăвар хушмалла. Çак хутăшран катлет тумалла, çăнăхпа йăваласа ăшаламалла. Катлета салатпа пĕрле çимелле.

**Купăстапа панулми салачĕ**

**400 грамм купăста, 2 панулми, пуçлă 2 сухан, 4 апат кашăкĕ тип çу, тăвар кирлĕ.**

Купăстана, панулмие, сухана вĕттĕн турамалла. Çимĕçсене тип çупа, тăварпа пăтратмалла.

**Чăхпа, хăярпа**

**200 грамм чăх какайĕ, 7-8 çĕрулми, тăварланă е чĕрĕ 2-3 хăяр, 3-4 апат кашăкĕ майонез, тăвар кирлĕ.**

Чăх какайне, çĕрулмие пĕçермелле. Какая тăваткалласа турамалла. Çĕрулмие теркăламалла. Хăяра пĕрчĕлесе касмалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

**Кишĕр кукăлĕ**

**Теркăланă 1 стакан кишĕр, 1,5 стакан çăнăх, 1 стакан сахăр, 1/2 стакан исĕм, 1/2 стакан тип çу, 1 чей кашăкĕ апат соди, сахăр çăнăхĕ кирлĕ.**

Кишĕре сахăрпа, тип çупа, шăтернĕ исĕмпе пăтратмалла. 10-15 минутран хутăша çăнăхпа, апат содипе пăтратса тип çу сĕрнĕ çатмана ямалла. Кишĕр кукăльне духовкăра 1 сехет пĕçермелле. Сĕтел çине лартиччен сахăр çăнăхĕ сапмалла.

**Какай рулечĕ**

**500 грамм какай фаршĕ, 200 грамм шампиньон, пуçлă 1 сухан, 3 шăл ыхра, 100 грамм майонез, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă сухана тип çупа ăшаламалла. Фарша суханпа, вĕтетнĕ ыхрапа, тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла.

Вĕттĕн туранă кăмпана тип çупа ăшаламалла, тăварпа пăрăç хушмалла.

Фарша апат-çимĕç çатăрки çине сармалла, ун çине кăмпа хумалла. Рулет майлă çавăрмалла. Çиелтен майонез сĕрмелле. Рулета духовкăра 45-50 минут пĕçермелле.

**Сыр соусĕнчи чĕре**

**3 сысна чĕри, 1 кишĕр, 1 пылак пăрăç, пуçлă 1 сухан, шăратнă 150 грамм сыр, 1 апат кашăкĕ томат пасти, 1 апат кашăкĕ çăнăх, тăвар, техĕмлĕх, тип çу кирлĕ.**

Чĕрене тăваткалласа турамалла. Кишĕре теркăламалла, сухана вĕттĕн касмалла. Чĕрене кишĕрпе, суханпа пĕрле ăшаламалла, тăвар, техĕмлĕх, томат пасти, çăнăх хушмалла. Шыв ярса вĕретмелле. Пĕрчĕлесе туранă сырпа пылак пăрăç хушсан апата тепĕр 15-20 минут пăшăхламалла.

**«Эсĕ тата эпĕ» торт**

**Чуста çăрма 2 çăмарта, 1 стакан сахăр, 0,5 стакан çăнăх, 2 апат кашăкĕ сĕт, 1 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

**Крем валли 250 грамм тăпăрч, 250 грамм хăйма, 1 стакан сахăр, 200 грамм хура слива, 20 грамм желатин, 50-шар грамм хура тата шурă шăккалат, 50 грамм услам çу хатĕрлемелле.**

Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, çăнăх, апат соди, сĕт хушмалла. Чустана 15 минутлăха духовкăна лартмалла.

Желатина вĕретнĕ 1 стакан шыва 15 минутлăха ямалла. Шăтернĕ хура сливăна вĕттĕн касмалла. Желатина ирĕличчен çулăм çинче тытмалла.

Хăймана тăпăрчпа, сахăрпа пăтратмалла, желатин, хура слива хушмалла. Çак хутăша корж çине сĕрмелле. Торта хытиччен сивĕтмĕше лартмалла. Унтан ăна теркăланă шăккалатпа илемлетмелле.

**Рис пăтти**

**200 грамм рис, пĕçернĕ 5 çăмарта, пуçлă 2 сухан, 100 грамм услам çу, 400 миллилитр шыв кирлĕ.**

Рис пăтти пĕçермелле. Вĕтетнĕ сухана тип çупа ăшаламалла. Тăваткалласа туранă çăмартана, сухана вĕри пăтăпа пăтратмалла. Ку апат услам çупа тутлă.

ЫЙТУ-ХУРАВ

# Вăхăтлăх чарăннине те пĕлтермелле

**Раççей Федерацийĕнчи регистраци йĕрки çинчен тĕплĕнрех пĕлесчĕ. Ун валли мĕнле документсем кирлĕ пулĕç?**

**Валентина ИВАНОВА.**
Шупашкар хули.

*Ыйтăва Раççей федерацин миграци службин управленийĕн Шупашкарти Калинин районĕнчи пайĕ хуравлать.*

Йĕрке тăрăх, Раççей гражданинĕн пурăннă çĕрте е вăхăтлăх чарăннă вырăнта регистрациленмелле. Документсене çакăншăн явапллă сынсен ятарлă органсене вăхăтра леçмелле. Çĕнĕ çĕре çитни çинчен 7 кунран кая юлмасăр пĕлтермелле.

Вăхăтлăх хутлĕх тупнă çыннăн 90 кунран тепĕр хут ыйту çырмалла. Субъект территорийĕнчех пурăнаканăн регистрациленмесен те юрать.

Регистрациленме çак документсем кирлĕ: паспорт /14 çула çитмен ачасен – çурални çинчен свидетельство/, ыйту, çакăнта килнин сăлтавне ăнлантарни.

Ыйту çыракан нумай функциллĕ центр е Пĕрлехи портал /http://www.gosuslugi.ru/ урлă патшалăх пулăшăвĕпе усă курма пултарать. Ун валли Пĕрлехи порталта анкета çырмалла тата пĕтĕмлетÿпе паллашмашкăн документ оригиналĕсемпе территори уйрăмне кĕрсе тухмалла.

Гражданин палăртнă вăхăтра регистрациленмен пулсассăн пурăнмалли кĕтес хуçин ĕçлемелли 3 кун хушшинче миграци службин вырăнти уйрăмĕпе çыхăнса пĕлĕмпе тивĕçтерни çинчен каламалла.

Йĕркене пăснăшăн вăхăтлăх вырăн тупнă гражданина та, хваттер е çурт хуçине те административлă майпа явап тыттараççĕ.

Тĕслĕхрен, регистрациленмен çынна пурăнтарнăшăн кĕтеспе тивĕçтерекенрен – 2000-5000 тенкĕ, юридици сăпатĕнчен – 250000-500000 тенкĕ шыраса илеççĕ.

Палăртнă йĕркене сăлтавсăр пăснăшăн е пурăнни çинчен тĕрĕс мар информаци панăшăн та /уголовлă майпа явап тыттарма сăлтав пулмасан/ хваттере яраканăн штраф тÿлемелле пулĕ. Уйрăм çыннăн 2-3 пин тенкĕ, юридици сăпачĕн 4-7 пин тенкĕ кăларса пама лекĕ.

Çавнашкалах гражданcене шута илмеллипе çыхăннă ыйтусене Раççей федерацин миграци службин Чăваш Республикинчи управленийĕн Интернет-сайтĕнче /http://fms21.рф усăмлатма пулать. Шупашкарти Калинин районĕнчи пайне, сăмахран, 63-02-19, 63-03-82 телефонпа шăнкăравлама май пур. Унта та хурав тупма пулăшĕç.

# Сĕчĕ çителĕклĕ-ши?



**Кăçалтан кролик ĕрчетме шухăшларăмăр. Нумай пулмасть ами çăварларĕ. Çурисене тăрантармалăх сĕчĕ çителĕклĕ-ши унăн – çакна мĕнле майпа пĕлме пулать-ши?**

**Е.МИХАЙЛОВА.**
Çĕрпÿ районĕ.

Тăраниччен ĕмекен кролик çурисем лайăх аталанаççĕ, йăвара лăпкă выртаççĕ. Ÿчĕ вĕсен яка, çăмĕ йăлтăртатать. Сĕт çитмен чухне вĕсем имшер пулаççĕ, çăмĕ тăлпаланчăк, ÿчĕ пĕркеленчĕк. Çурасем нăйăклатаççĕ, читлĕхре сапаланса выртаççĕ, пĕр-пĕрне ĕмеççĕ.

Кролик çури çуралсанах 20 кун амăшĕн сĕчĕпе кăна пурăнать. 1 грамм ÿт хушма пĕчĕкскере 2 грамм сĕт кирлĕ.

ПĔЛЕТĔР-И?

# Çĕпрене мĕнле упрамалла?

Лайăх çĕпрепе çăрсан çеç кăпăшка чуста хăпарать. Кукăль пĕçермессерен çĕпре туянма чупаймăн, ку çимĕçе килтех упрама пулать. Ăна сывлăш температури 6-8 градус ăшăран иртмен вырăна хумалла. Çĕпре касăкне вĕтетсе типĕтсен лайăх: ăшă шыва ярса ирĕлтерме те меллĕ. Çăнăх хутаçне хурса упрасан та вăл хăвăртах пăсăлмĕ.

# Сывлăша усăлтарма

Шыв янă кастрюле лимон хуппи хурăр та савăта çулăм çине лартăр. 15-20 минут вĕретсен пÿлĕмре цитрус шăрши сарăлĕ. Лимон хуппи крансене те лайăх тасатать, хыççăн шывпа çăвăр та çемçе татăкпа типĕтĕр.

# Сухари вырăнне

Катлета, какая, пулла ăшалас умĕн çăнăхра е вĕтетнĕ сухарире йăваламалла. Кун пек чухне шултра аврăтнă çăнăхпа усă курма тăрăшăр. Пылак çимĕçе манна кĕрпипе йăваласа пĕçерсен лайăхрах. Хăшĕ-пĕри куккурус кĕрпине кăмăллать.

Сухари ал айĕнче çук чухне ăна килте те хатĕрлеме пулать. Батона тăваткалласа турамалла та ăшă духовкăра типĕтмелле, ытлашши çунтарасран асăрханмалла. Сивĕнсен хутаçа хурса çиелтен йĕтĕрпе пусса тĕпретмелле е теркăпа вĕтетмелле.

Тепĕр мелпе те усă курма юрать. Çемçе кулача е батона шăнтмăшра 3 сехете яхăн тытмалла. Хытăскере теркăласа вĕтетмелли çеç юлать.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Парафин витĕмĕ

Исĕм çырли сапакине нÿхрепе çакмалла е ещĕке хумалла. Анчах каснă вырăна парафинпа витмелле. Çавна май çырла çĕрмĕ, унăн тути улшăнмĕ.

# Сухан хуппинчи ыхра

Ыхрана пир хутаçра упрама пулать. Ун хушшине сухан хуппи хумалла.

# Хăйăрти кишĕр

Хуппинчен тасатнă 1 стакан ыхрана аш арманĕ витĕр кăлармалла. Ăна 1 литр шыва ямалла. Кашни кишĕре çак хутăша чиксе кăлармалла. Çимĕçе 15 минут типĕтни çителĕклĕ. Кишĕре нÿрĕ хăйăрпа витмелле. Пахчаçимĕç пĕр-пĕрне перĕнмесен лайăхрах.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

# Чĕрĕкрен хăтăлма

Сĕтел-пукан çинчи чĕрĕке пытарма ятарлă хутăшпа усă курмалла. Вăйсăр çулăм çинче ирĕлтернĕ ăвăса скипидарпа /тăватă пай ăвăс пуçне виçĕ пай скипидар/ хутăштармалла. Унтан икĕ пай спирт ярса пăтратмалла. Чĕрĕлнĕ вырăна краççынра йĕпетнĕ çăм татăкпа сăтăрмалла, кайран ятарласа хатĕрленĕ хутăша сĕрмелле. Çакăн хыççăн япалана çăм татăкпа йăлтăртатакан пуличчен якатмалла.

# Алюмини савăта...

Кил хуçи арăмĕсем алюмини савăта шалтан та, тултан та хими япалипе тасатаççĕ. Çĕнĕрен йăлтăртатма пуç-лать вăл. Анчах шалтан çапла тасатни сывлăха усал витĕм кÿрет. Алюмини кастрюле е савăта ăшă шыв ярса лартмалла, кăштахран хуçалăх супăнĕпе çумалла.

# Сăран хатĕре тасатма

Сăран пукана е дивана тасатма ансат. Малтан бензинпа йĕпетнĕ çăм татăкпа сăтăрмалла, унтан кăпăклантарнă çăмарта шурри сĕрмелле. Çакăн хыççăн шывпа çумалла.

# Пушмак тĕпĕ çурăласран

Пушмак тĕпĕ хăвăртах çурăлма е шăтма пултарать. Хутран-ситрен йĕтĕн, глицерин е касторка çăвĕ сĕрсен вăл юрăхсăр тухмĕ.

АСӐРХӐР: ТАКМАКСЕН КОНКУРСӖ!

# Тӑванӑм-вулаканӑм!




Ир килет те каҫ пулать, ҫӗрпе кун час улшӑнать. Ҫӗрпе кун улшӑнӑвӗнче чи кирлӗ ыйтӑва манӑҫа хӑвармарӑр-и – "Чӑваш хӗрарӑмне" ҫырӑнма манмарӑр-и? ПАЯН тата ЫРАН кӑна укҫана перекетлеме май пуррине аса илтеретпӗр – пирӗн кӑларӑма ҫитес ҫурҫуллӑха 316,50 тенкӗпе ҫырӑнтараҫҫӗ. Каярахпа мӗн пуласси не кам калӗ – халӗ хаксем ӳссех пынине хӑнӑхрӑмӑр та пулӗ.

Ҫырӑнтару тапхӑрӗ кӑсӑклӑрах ирттӗр тесе, вулаканӑм, такмаксен конкурсне ирттерес терӗмӗр. Конкурс условийӗсемпе килӗшӳллӗн, такмака "Чӑваш хӗрарӑмӗ" хаҫата халалламалла тата вӗсем халӑхра сарӑлнисем пулмалла мар – хӑвӑр ҫырнисене кӑна йышӑнатпӑр. Такмаксен конкурсне шӑпах ҫырӑнтару тапхӑрӗ вӗҫленсен, раштав уйӑхӗн вӗҫӗнче, пӗтӗмлетӗпӗр – ҫапла вара Ҫӗнӗ ҫула "Чӑваш хӗрарӑмӗн" парнипе кӗтсе илес шанӑҫ пур сирӗн, тусӑмӑрсем. Апла тӑк – ҫырӑр, хайлӑр, такмаклӑр! Такмаксене электрон адреспа та ярса пама пултаратӑр. Ӑнӑҫу сунатпӑр!

УЯВ

# Аваллӑха асра тытса – малашлӑха

К.В.Иванов ячӗллӗ литература музейӗ 75 ҫул каялла – 1940 ҫулхи юпа уйӑхӗн 18-мӗшӗнче – уҫӑлнӑ. Ҫак пӗлтерӗшлӗ пулӑма Константин Васильевич ҫуралнӑранпа 50 ҫул ҫитнине халалланӑ. Иван Ивник сӑвӑҫ ертсе пынӑ ӑна ун чухне. Хаяр вӑрҫа пула 1941 ҫулта Чӑваш литературипе искусствин музейӗ вӑхӑтлӑх хупӑннӑ. 1957 ҫулта экспозицисене ҫӗнӗрен уҫнӑ. Ӑна Петр Юркин йӗркелесе пыма тытӑннӑ. Анчах 1978 ҫулта вӑл каллех хупӑннӑ. Хальхинче – Шупашкарта ГЭС тунӑран: музей вырнаҫнӑ ҫурт шыв айне пулакан лаптӑкра ларнӑ-ҫке. Константин Иванов ҫуралнӑранпа пӗр ӗмӗр ҫитнине паллӑ тунӑ чухне, 1990 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 27-мӗшӗнче, вӑл хула варринче вырнаҫнӑ ҫуртра тепӗр хутчен алӑкӗсене яри уҫнӑ. Паянхи кунччченех Ленинград урамӗнчи 29/20-мӗш ҫуртра «пурӑнать» вӑл.

Музей экспозицийӗсем чӑваш литературин пурнӑҫне туллин сӑнлаҫҫӗ. Унӑн историйӗ ҫуралнӑ тапхӑртан пуҫласа паянхи кунччченех ҫырӑнса пырать. Паллах, «Нарспи» авторне уйрӑм вырӑн уйӑрнӑ. Иванов пӳлӗмӗн кӗтесӗнче поэт алҫырӑвӗсемпе ӳкерчӗкӗсем те упранаҫҫӗ.

Иван Яковлевпа Чӗмпӗрти чӑваш шкулне халалланӑ кӗтес те пуян. Кунта чӑвашла пӗрремӗш алфавит та, чӑваш букварӗ те, тӑван чӗлхепе вуламалли пӗрремӗш кӗнекесем, И.Я.Яковлевпа И.Н.Ульянов пӗрпӗрне янӑ ҫырусем те пур.

Сӑвӑҫсемпе ҫыравҫӑсен, драматургсен пултарулӑхӗпе паллашма май парать музей.

Фронтра пулнӑ ҫыравҫӑсене уйрӑм вырӑн уйӑрнӑ. Вӑл вӑрҫӑра пулнӑ корреспондентсен блокночӗсемпе, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи сӑвӑ пуххипе, литераторсен сӑнӳкерчӗкӗсемпе пуян. Паянхи литература кунҫулӗ валли те вырӑн уйӑрнӑ.

Литература музейӗнче часчасах тӗрлӗ кӗнеке презентацийӗ, поэзи, асӑну каҫӗсем, ҫыравҫӑсемпе студентсен, шкулта вӗренекенсен тӗлпулӑвӗ, литературӑпа музыка каҫӗ йӗркелеҫҫӗ. Хальхинче кунта музей алӑкӗсене уҫнӑранпа 75 ҫул ҫитнине паллӑ тума пухӑнчӗҫ. Ҫыравҫӑсем, вӗрентекенсемпе вӗренекенсем, тӗрлӗ музейра тӑрӑшакан, ахаль ҫынсем...

ЧР культура министрӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлакан Константин Яковлев уявпа саламланӑ май республикӑра туризма аталантармаллине, ҫавна май ятарлӑ маршрут хатӗрлемеллине, Литература музейӗ шӑпах унта кӗмеллине палӑртрӗ. Константин Ивановӑн музей-ҫуртӗнче упранакан япаласен копийӗсене Шупашкарти музейра вырнаҫтарасси пирки шухӑшламаллине систерчӗ.

Литература музейӗн ертӳҫи Ирина Оленкина Литература тата Константин Иванов ҫулталӑкӗнче ирттернӗ мероприятисемпе паллаштарчӗ, ҫӗнӗлле ӗҫлеме тӑрӑшнине, ҫавӑнпах мастер-классем, вӑйӑ-уроксем, тӗрлӗ тематика экскурсийӗсем ирттернине, конкурс йӗркеленнине пӗлтерчӗ.

– Паянхи Литература музейӗ аваллӑха асра тытса малашлӑха утать, – терӗ Ирина Вячеславовна.

Музее хисеп туса килнисен йышӗнче ЧПУн вырӑс тата чӑваш филологийӗпе журналистикин факультечӗн вӗрентекенӗсемпе студенчӗсем те пулчӗҫ. 22 чӗлхепе янӑракан вилӗмсӗр «Нарспи» поэмӑн сыпӑкне вӗсем чӑвашла, вырӑсла, тутарла, мӑкшӑлла, украинла, турккӑлла, нимӗҫле, акӑлчанла тата венгрла вуларӗҫ, поэма сыпӑкӗсене кӑтартрӗҫ. Нарспие хӗнекен Тӑхтаман пушши залра пухӑннӑ мӗнпур халӑха шарт! сиктерчӗ. Ҫак самантра умра выляреҫ ҫеҫ пулин те чӑваш хӗрне кашниех хӗрхенчӗ, кӗлетке тӑрӑх сивӗ чупрӗ.

– Литература йывӑҫӗ – нумай туратлӑ. Проза туратти те, поэзи туратти те, ача-пӑча туратти те – темӗн те пур унта. Литература музейӗнче те кашнин валли вырӑн пур. Мӗнпур кӗнеке-статьяна тишкерсен ӑслӑлӑх ҫынни пулса тӑрӑн, – музее тав турӗ Чӑваш халӑх поэчӗ Юрий Сементер.

Чӑваш халӑх ҫыравҫин Денис Гордеевӑн та салам сӑмахӗ пурах.

– Ытти республикӑсенче уйрӑм ҫыравҫӑсен музей-хваттерӗсем пур-ха, анчах пирӗнни пек Литература музейӗ ҫук. Хӑнана килекен кашни халӑх ӑмсанать пире. Ҫавӑнпах эпир ыттисенчен телейлӗрех тесе шухӑшлар та музей ҫулне манар мар. Ыранхи ӑру валли кирлӗ паянхи пурнӑҫ вӑл, – терӗ Денис Викторович.

– Музей вӑл – университет. Кунта эпир пурсӑмӑр та пӗлӗве ӳстеретпӗр, тавракурӑма саратпӑр. Чӑннипех те ӑмсанаҫҫӗ пире. Кунран чаплӑрах музейсем пур, анчах ку – Литература музейӗ. Кунта литература историйӗ сӑнланать. Пурин валли те вырӑн пурри те паха. Музей уҫмалла текен шухӑш патне пырса тухнисен тата уҫнисен умӗнче пуҫӑмӑрсене таймалла, – терӗ «Хыпар» ИД ҫурчӗн тӗп редакторӗ Валери Туркай.

Студентсемпе пӗрлех вӗрентекенсем, шкул ачисем юрӑ саламӗсемпе савӑнтарчӗҫ. Анатолий Никитин ертсе пыракан «Янташ» ушкӑнпа Клара Осокинӑн халӑх юррисене шӑрантаракан «Таравват» ансамблӗ уява тата пуянлатрӗҫ.

**Татьяна НАУМОВА.**

Анатолий ХМЫТ

# Хусан хӗрӗ Хуанита

***Пӗр пайлӑ, виҫӗ курӑнуллӑ пьеса***

**/Малалли. Пуҫламӑшӗ иртнӗ номерте/.**

**Майя.** Йӑнӑш? Йӗркеллӗ? Эпӗ сана-и! */Каяҫҫӗ/.*

*Чаршав.*

**Иккӗмӗш курӑну**

*Ҫав кунах. Пӗрремӗш курӑнури сцена. Хураҫка сак ҫинче ларать, гитара каласа тунсӑхлӑ юрӑ юрлать.*

*Хӗрлӗ шӑлавар тӑхӑннӑ Мӗккӗт кӗрет. Ҫамки ҫине лейкопластырь ҫыпӑҫтарса хунӑ.*

**Мӗккӗт** */вӑрттӑн/.* Пӗлетӗн-и?

**Хураҫка** */юрлама чарӑнса/.* Мӗн?

**Мӗккӗт.** Эрнӳҫ чӗлхин вӑйӗ пур. Эсӗ кайсанах Хуанита хӑй тухрӗ.

**Хураҫка.** Вара?

**Мӗккӗт.** Ӗненессӗм килмест! Эпӗ... эпӗ ун... Ҫук, ӑна чуптуса та илтӗм. Авланса та ярӑттӑм-и? Анчах та...

**Хураҫка.** Чуптуса?

**Мӗккӗт.** Ара ҫав. Хураҫка, итле-ха! Тен, эсӗ манӑн Майӑна качча илӗн, э? Эпӗ вара Хуанитӑпа... Вӑл мана качча тухма хирӗҫ мар пек! Ну, Эрнӳҫ! Маттур та маттур!

**Хураҫка** */тӑрса/.* Маййӑна-а-а? Эсӗ мӗн – тилпӗрен ҫимерӗн-и? Е?..

**Мӗккӗт.** Ҫук. Пӗр ахаль Эрнӳҫе ӗненмерӗн.

**Хураҫка.** Тӗшмӗш пӑтти ҫиекен путса вилнӗ тет.

**Мӗккӗт.** Тет-и, тет мар-и унта! Анчах та кун пек хӑйма ӑшне эпӗ пуҫӗпех чӑмма хатӗр! Ӑнлантӑн-и? Ӗненместӗн эппин?

**Хураҫка.** Ҫук.

**Мӗккӗт.** Тен, ҫыртса пӑхатӑн? */Сухарине кӑларать/.*

**Хураҫка.** Кирлӗ мара ан калаҫ.

**Мӗккӗт.** Хӑвӑн мӑнтӑр кӑмӑлу! Ас ту, Хуанита манӑн пулать.

**Хураҫка.** Вара Майя чӑнласах пуҫна касать!

**Мӗккӗт.** Ҫавӑ пӑшӑрхантарать те ӗнтӗ. Унсӑрӑн...

**Хураҫка.** Ҫаптармастӑн-и?

**Мӗккӗт.** Пӗр суймасӑр.

**Хураҫка.** Лӗпӗртететӗн вӗт.

**Мӗккӗт.** Ҫук тенӗ сана! */Сухарине тыттарать/.*

*Хуанита тухать.*

**Мӗккӗт.** Хӑй тухрӗ!.. Хусан пикине салам!

**Хуанита.** Салам, салам! Епле сывӑ юлма пӗлтӗн, тусӑм? Эпӗ сана васкавлӑ пулӑшупах илсе кайрӗҫ тесе.

**Мӗккӗт.** Ҫук. Майя вӑл ҫиелтен ҫеҫ... Шалта вара – пыл та ҫу!

**Хуанита.** Ҫуне куртӑм-ха! Пылне те... */Ҫамкине асӑрхаса/.* Э-э-э, хурт-хӑмӑрӗ питӗ усал пулнӑ иккен! Каҫар мана, ухмаха! Чухлаймарӑм. Эх! Ман валли ҫӗр ҫинче хусахсем юлмарӗҫ те-ши?

**Мӗккӗт.** Мӗншӗн? Юлнӑ! Акӑ. Паллаш! Ҫуруй каччи! Хусах Хураҫка.

*Хураҫка васкаса сухари чӑмлать.*

**Хураҫка** */чӑмлакне ҫӑтса/.* Хур... Хураҫка.

**Хуанита.** Мӗккӗт, мана эсӗ кӑмӑла кайрӑн!

**Мӗккӗт.** Хураҫка, Хураҫка вара мӗнрен япӑх! Пӑх-ха ун ҫине – вӑкӑр пек тӗрек! Ӳтпӗвӗ выляса тӑрать! Кӗсйисем тата... кӗсйисем манӑннинчен те туллирех!

**Хуанита.** Ҫук. Ӑраскалӑм тухмарӗ иккен.

**Мӗккӗт.** Ӑн-лан-мал-ла. */Хуанитӑна аяккалла ҫавӑтса/.* Чунӑмҫӑм, "не волнуйся", йӑлт "шито-крыто" пулать. Леш майри вӑл ман – так себе! Ӑнсӑртран – кӗмсӗрт тенӗн ҫеҫ! */Хураҫка патне пырса/.* Тен, Майӑпах ҫырлахан? Э-э-э? Куратӑн вӗт – кӑшт каярах юлтӑн! Куҫӗ ман ҫинче вылять!

**Хураҫка** */ҫилӗпе/.* Ҫук тенӗ сана!

**Мӗккӗт.** Шел! Майӑпа лайӑх мӑшӑр пулаттӑрччӗ!

**Хураҫка** */ҫилӗпе/.* Хӑв пул! Пӑрӑн! */Каять/.*

**Мӗккӗт.** Юрать ӗнтӗ. Ан тулхӑр.

**Хуанита.** Хусах Хураҫкана ӑҫта ӑсатрӑн тата?

**Мӗккӗт.** Каймалли пур терӗха! Мӗнле хитре, мӗнле асамлӑ вӗт-ха эсӗ – Хуанита! Сан ҫумӑнта манӑн чӗрем пахчари "Беларуҫ – 132Н" трактор евӗр вут-хӗлхем сирпӗтсе тӑрӑлтатса ҫеҫ тӑрать! Ых! Ӑш вӑркать! Тен, кӑшт-кашт унта-кунта уҫӑлмалла кайса килӗпӗр?

**Хуанита.** Тӳрех-и? Леш, хайхи – "ӑнсӑртран-кӗмсӗрт" персе ансан?

**Мӗккӗт.** Э-э-э! Вӑл иртни! Паян тумалли ӗҫе ырана хӑварар мар!

**Хуанита.** Ара, ӗнтӗ. Апла пӗрлешмен-ха тетӗн?

**Мӗккӗт.** Ҫу-ук! Шутламан та...

**Хуанита.** Мана качча илесшӗн-и?

**Мӗккӗт.** Пит аван пулмаллаччӗ те...

**Хуанита.** Апла... */Хӑлхинчен тем вӑрттӑн калать. Кулса сак ҫине пырса ларҫҫӗ/.*

*Хӗрлӗ шӑлавар тӑхӑннӑ Хураҫкапа Юмӑҫ кӗреҫҫӗ.*

**Юмӑҫ.** Кутӑнлашмаҫҫӗ ӑна! Каланине ҫийӗнчех тӑваҫҫӗ. Халӗ йывӑртарах пулать.

**Хураҫка.** Кам шутланӑ?

**Юмӑҫ** */пӑхмасӑр/.* Мӗккӗт, эсӗ кунта-им?

**Мӗккӗт.** Хӑв куратӑн.

**Юмӑҫ.** Куратӑп ҫав. Акӑ – Майӑна та курсах тӑратӑп! Вӑл... вӑл аллине сенӗк тытнӑ. Таҫта васкать. Утӑ пуҫтармаши? Ҫук. Кунталла утать!

**Мӗккӗт.** Ку... кунталла? */Сиксе тӑрать/.*

**Хураҫка** */аякка пӑхса/.* Чӑн та – такам васкать.

**/Вӗҫӗ пулать/.**

ПУЛАТЬ ВĔТ

# Йĕкĕреш хăраххи тепринчен 3 уйăх маларах çуралнă





Америкăра пурăнакан мăшăр – Ник тата Холли Горвитсем – иккĕмĕш ачине кĕтеççĕ. Çие юлни пĕр вăхăт иртсен çакă палăрнă – хĕрарăм варĕнче йĕкĕреш тĕвĕленнĕ-мĕн. Мĕнех, тĕвĕленнĕ тĕк тĕвĕленнĕ – Турă мĕн пани йăлтах ырлăх. Пепкесен çитес çулхи кăрлач уйăхĕнче çут тĕнчене килмелле пулнă. Анчах та яланах этем палăртнă пек пулса пымасть çав...

Йĕкĕрешсем пĕр çурхахра аталаннă. Апла тăк юн иккĕшĕн патне те пĕр пекех пымалла пек. Анчах та ку тĕслĕхре тем пулнă – ачасенчен пĕрин патне юн ытларах пынă, апла тăк унăн организмне, уйрăмах – чĕрине, йывăр пулнă. Тепри вара, юн сахал пынине кура, кислород çитменнипе асапланма пуçланă. Мĕн тумалла? Çураласса кĕтсен иккĕмĕш пепке хырăмрах вилсе кайма та пултарать вĕт. Инкекпе вĕсленмесен те вăл питĕ имшер те вăйсăр çураласси паллă.

Тухтăрсем кăткăс йышăну тунă. Вĕсен пулăшăвĕпе Линк, ачана çапла ят панă, палăртнинчен самай маларах çуралнă – Эвергрин медицина центрĕнче 23 эрнере кун çути курнă вăл. Пепке йывăрăшĕ 510 грамм пулнă. Ача ытла та пĕчĕк пулнипе ашшĕ-амăшĕ ăна алла та тытайман.

Шурă халатлисем систернĕ тăрăх, Линк сывлăхĕшĕн те, пурнăçĕшĕн те нимĕнле хăрушлăх та çук. Пепкене çуралма пулăшнă Мартин Уокер тухтăр палăртнă тăрăх, Линк чиперех аталанса пырать. Ăна вăхăтсăр çуралнă ачасен уйрăмĕнче тытаççĕ. Иккĕмĕш пепке, ăна ашшĕ-амăшĕ Логан ятпа тивĕçтернĕ, палăртнă пекех çут тĕнчене хĕлле килĕ.

/«Lori.ru»/.

ТАВĂРУ

# Пуç – кĕлеткерен уйрăм





Çапла, çапла, тепĕр чухне пуç кĕлеткерен пачах уйрăм пулма пултарать.

Исаак Эби – Вашингтон штатĕнчи Уидби утравĕ çине шурă çынсенчен чи малтан çитнисенчен пĕри. Пиччĕшĕ патне çырнă чухне вăл çак çĕр çинчен "çăтмах кĕтесĕ" тесе палăртнă.

Анчах шурă ўтлисем вырăнти халăха килĕшмен. Майĕпенех хирĕç-тăру пуçланнă. Правительствăн утрав çине ирĕксĕрех салтаксене яма тивнĕ. Вĕсем каярахпа куçса пынисене хўтĕленĕ, çавна май вырăнтисене пĕтĕмпех тенĕ пек пере-пере пăрахнă. Унта тахçанах тымар янисенчен питĕ сахалăшĕ çăлăнма пултарнă. Анчах та вĕсем тавăрма сăмах панă.

1857 çулхи çурла уйăхĕн 11-мĕшĕнче Эби полковник алăкне такам пырса шакканă. Арçын йĕркеллĕ уçма та ĕлкĕреймен, унăн пуçне çавăнтах касса тарнă.

Мĕн пулса иртнĕ çак пуçпа каярахпа – Америкăра халĕ те татса калама пултаракан çук. Хăшĕ-пĕри çирĕплетнĕ тăрăх, ăна икĕ çултан каялла тавăрса панă. Анчах çемье архивĕнчи документсенче çакăн пирки калани çук.

Çывăх çыннисем палăртнă тăрăх, 1860 çулта Эби тăванĕ тĕрĕслĕхе палăртма çар çыннисенчен пулăшу ыйтнă. Çавăн чухне полковникăн скальпне тавăрма май килнĕ. 1859 çулта Додд капитан полковник пуçне темиçе утиялпа, тутăрпа, пир-авăрпа, табакпа улăштарса илнине калаççĕ.

Чăн та, каярахпа Эби пуçне çапах та тăванĕсене тавăрса панă. Çывăх çыннисем палăртнă тăрăх, вăл тĕлĕнмелле лайăх сыхланса юлнă.

Урăх çăлкуçсем вара пачах расна ўкерчĕк сăнлаççĕ. Арçыннăн пуçне йăмăкне инкек хыççăн 10-12 çултан кăна тавăрса панă. Каярахпа скальп Эби пĕр тăванĕнчен теприне куçнă. Çапла майпа полковникăн Калифорнири тăванĕсем  патне çитнĕ.

/New.day.as/.

АХ, АНЧАХ...

# Чун туянас текен çук-и?

Раççей пĕр компанийĕнчи регионсен аталанăвĕшĕн яваплă менеджер Екатерина Интернетри аукционра хăйне евĕрлĕ пĕлтерў вырнаçтарнă – унта хĕр хăйĕн... чунне сутассине пĕлтернĕ. Чунĕшĕн малтанлăха 500000 тенкĕ ыйтнă. Хĕр каярахпа пĕлтернĕ тăрăх, çуртне юсаса пĕтермешкĕн ăна шăпах çакăн чухлĕ укçа çитмест-мĕн.

Чунне сутма шухăшланисĕр пуçне хĕр ыркăмăллăх акцийĕ те йĕркеленĕ – хăйне капла та пулăшмашкăн ыйтнă. Чăн та, хальлĕхе акци те, аукцион та хăйсен çимĕçне кўмен-ха. Пике каланă тăрăх, хальлĕхе ун ячĕпе аван мар çырусем кăна çыраççĕ.

Чунне сутас шухăш хĕр пуçĕнче ăнсăртран тенĕ пек тĕвĕленнĕ. Хăй каласа кăтартнă тăрăх, вăл ĕçлекен компани пысăк пулсан та унта вăл илекен шалу çителĕклĕ мар. Çуртĕнче вара мĕн тери чаплă юсав ĕçĕсем ирттерес килет!

Екатерина маларах упăшкинчен уйрăлнă-мĕн. Кун пек чух, паллах, чуна лăскамасăр пулмасть. Çапах та чиперук хăйĕн чунĕ чиперех иккенне ĕнентерет туянас текенсене – "çĕнни пекех". Палăртни пурнăçлансан, хĕр укçа-тенке чи малтанах чўречене улăштарма тăкакласшăн, юлашкипе амăшĕн кушакĕ валли хăтлă йăва йĕркелесшĕн.

Анчах та чуна мĕнле туянмалла-ха? Хĕр çакна та палăртса хунă ĕнтĕ – вăл туянакана вăхăтне палăртман, нимĕнпе те чикĕлемен сертификат парĕ, апла тăк лот хуçи унăн чунĕпе хăть те мĕн тума пултарĕ. Çакă инкекпе вĕсленмĕ-и? Çук, хĕре ку та хăратмасть.

Çакăн пек аукциона шутласа кăларакан Екатерина пĕрремĕш мар. Америкăра маларах кун пек тĕслĕх пулнă – Нью-Мексикори писатель шăпах Интернетри аукциона хăйĕн "кăштах тăпланнă" чунне вырнаçтарнă, уншăн 2000 пин доллар ыйтнă. Анчах та Америка çыравçи маларах автокатастрофăна çакланнă-мĕн, хытах аманнă. Пурăнса-асапланса ывăнса çитнĕскер çапла майпа хăйĕн чунне çăласшăн пулнă. Вăл каярахпа хăйĕн чунĕ çинчи шурă тата хура йăрăмсем çинчен каласа кăтартма шантарнă. Анчах та ун чухне те палăртнине пурнăçлама май килмен – чуна туянас текен тупăнман.

Мускаври тĕпленнĕ хĕр тĕне кĕни паллă. Çапах та вăл хăйĕн утăмне сылăхпа танлаштармасть. Вăл чунне сувенир пек кăна сутнине палăртать – калăпăр, "Уйăхăн пĕр катăкĕ пек"...

Тĕлĕнмелле лот пирки Molotok.ru аукцион сайчĕн гендиректорĕ Игорь Тарасенко пĕлет паллах. Вăл каланă тăрăх, унта тĕлĕнтермĕшсем сайра-хутра кăна вырнаçтараççĕ, вĕсемпе кăсăкланакан вара питех çук. Çапах чун сутасси пирки пĕлтернĕ лот иттисенчен уйрălса тăрать темелле – ăна висĕ кунра 200 çын уçса пăхнă. Ахăртнех, туянассинчен ытла çынсене ку ахаль кăна кăсăклантарнă. Хăйне евĕрлĕ итти лотсенчен Тарасенко Шотланди çĕрне Интернетри аукцион урлă сутма тăнине асăнать – пĕр футшăн /1 фут – 30648 см/ 5999 тенкĕ ыйтнă-мĕн.

/«Известия»/.

ШУХĂШЛАСА ТА КĂЛАРАЙМĂН

## Ваккат хўтĕлет...

Томас Макджин хăй пурăннă хулара ялан тĕрлĕ пăтăрмаха лекнипе палăрнă. Çитменнине, айăпли нумай чухне вăл пулнă.

1871 çулта ăна хупахра пĕр арçынпа тавлашса кайнă хыççăн хайхине персе вĕлернĕшĕн айăплама тăнă. Макджин ваккат тытнă. Клемент Валландигем ăна тăрăшсах хўтĕленĕ. Айăпли, пачах тепĕр май, Мейерс иккен – вилнĕ çынна çапла чĕннĕ: вăл шăлаварĕнчи пистолета кăларма тăнă, анчах та ăнсăртран персе янă... Судра Валландигем çакна тĕслĕхпе – хальхи чĕлхепе каласан, следстви экспериментпе иртерсе – çирĕплетме тĕв тунă. Ваккат икĕ пистолет хатĕрлесе сĕтел çине кăларса хунă: пĕрне авăрланă, теприне – çук. Анчах та пистолетсене шăлавар кĕсйине чикнĕ чух арпаштарса янă – унта вăл авăрланине вырнаçтарнă та ĕç-пуç тĕрĕссипе мĕнле пулса иртнине сăнлас шухăшпа йĕм пĕççине туртăнтарнă. Паллах, пўлĕмре кĕрслетнĕ... Шăпах хупахра пулса иртнĕ пек.

12 сехетрен Валландигем вилнĕ. Тĕлĕнмелле те, суд Макджина тўрре кăларнă.

## Шăпаран тараймăн

Роберт Моррис, колони пысăк чиновникĕ, 1750 çулта тĕлĕк тĕлленсе выртнă. Унăн тепĕр кун карап тĕрĕслемелле пулнă. Тĕлĕк вара çав карап çинче уяв салючĕ панине пула Моррис вилессине пĕлтернĕ.

Ирхине Моррис хăй ним тусан та карап çине каймассине пĕлтернĕ, сăлтавне те пытарман. Капитан ăна ăлплантарнă – Моррис çыран хĕррине çитмесĕр нимĕнле салют та пулмĕ. Роберт килĕшнĕ.

Карапа тĕрĕсленĕ хыççăн Морриса пĕчĕк шлюпка уйăрса панă. Чиновник унта ларса карапран уйрăлса кайсан командăна тупăсенчен пемешкĕн хатĕрленме хушнă. Анчах та шăп çав вăхăтра капитан сăмси çине... шăна пырса ларнă. Вăл ăна хăваласа ярас тесе аллипе сулкалашнă. Команда вара çакна тупăсенчен пемешкĕн паллă пани пек йышăннă. Салют кĕрленĕ. Етре пĕр пайĕ карапран инçех ишсе кайма ĕлкĕреймен Морриса лекнĕ...

Ахальтен каламаççĕ, шăпаран тараймăн.

## Чĕрĕллех пытарнă

Пилĕк çулти ывăлне Макса пытарнă хыççăн амăшĕ Хоффман миссис ниепле те лăпланайман – ăна яланах пепкине тĕрмене хупнă пек курăннă. Арçын ача чышкине чăмăртаса тыткăнран хăтăлма ăнтăлнă. Ир вăрансан хĕрарăм упăшкине ывăлне чавса кăларма ыйтнă. Анчах та арçын итлемен, мăшăрĕ кăлăхах пăлханать тесе шухăшланă.

Анчах тепĕр кас та хĕрарăма çак тĕлĕкех тĕлленнĕ те арçын ўкĕте кĕнĕ. Çурçĕр иртсен мăшăр кўршипе пĕрле çăва çине кайнă, арçын ачана çапах та чавса кăларнă. Вăл ăна мĕнле пытарнă, çавăн пекех выртнă. Пурнăç паллисем те пулман. Çапах та мăшăр ăна тухтăрсене кăтартса пăхма шухăшланă.

Маларах арçын ача вилнине çирĕплетнĕ тухтăрах, кăмăлсăррăн пулин те, реанимаци иртерме пуçланă. Сехетрен... арçын ачан куç хупанки выляма пуçланă! Эрнерен Макс пуçĕпех тăна кĕрсе çитнĕ. Ĕмĕрĕ унăн вăрăм пулнă – арçын тăхăрвунă çула çитиччен пурăннă.

/Shtorm777.ru/.



## ЛĔП-ЛЕП




● **«АЧА-ПĂЧА ПУЛТАРУЛĂХ КЕРМЕНĔ» ТЕНĔ ПУЛСАН – ТĔРĔСРЕХ ТЕ, КĂМĂЛЛĂРАХ ТА...**

Рита АРТИ сăнӳкерчĕкĕ.

## И-ХИ-ХИК

**– Ака уйăхĕн 1-мĕшĕ ĕçре мĕнле иртрĕ?**

**– Питĕ аван, кунĕпе култăмăр – директор пирĕн пая пĕтересси пирки хушу кăларнă та. Паян вара никам та кулмасть – директорсăр пуçне: унăн ĕнер шӳтлес шухăшĕ те пулман иккен.**

* * *

**Ака уйăхĕн пĕрремĕшĕнче директора Кулăш кунĕпе саламларăм, вăл вара мана – Ухмахсен кунĕпе. А мĕн, тавлашаймастăн та вĕт...**

* * *

**Автобусра асламăшĕпе мăнукĕ пыраççĕ. Шăпăрлан хĕрарăм миçе çултине пĕлесшĕн, лешĕ май пур таран хуравран пăрăнать.**

**– Асанне, пĕрремĕш цифрине те пулин кала-ха, – йăлăнать пĕчĕкскер.**

**– Пиллĕк.**

**– Иккĕмĕш вара?**

**– Тăваттă.**

**– Виççĕмĕш...**

* * *

**Çемьере кĕçĕнни çуралнă. Асли унран 3 çул аслăрах. Акă пĕчĕккин те чĕлхи уçălма пуçланă.**

**– Анне, манăн йăмăк чăваш мар-им? – ыйтать асли.**

**– Мĕншĕн ун пек шухăшлатăн?**

**– Ăнланмалла калаçмасть те...**

* * *

**Улттăри Вовочка ним тусан та шкула каясшăн мар. Амăшĕпе ашшĕ те, кукамăшĕ те темĕн те каласа пăхаççĕ – арçын ачана нимĕнпе те ӳкĕте кĕртме çук. Юлашкинчен ватти шăпăрлан валли сăмах тупатех:**

**– Шкулта вĕренмен ачасене каярахпа нимĕнле ĕçе те илмеççĕ. Ĕçлемесĕр вара мĕн çисе пурăнас тетĕн?**

**– Юрĕ, – аранах ӳкĕте кĕрет хайхи. – Анчах та шкула вунçиччĕре кăна кайăп. Хыççăнах ĕçе вырнаçăп – атте пекех механик пулăп.**

* * *

**Çывăрмалли пӳлĕмре чăнчăн вăрçă пырать.**

**– Манăн Машкăпа упа çинчен мультик курас килет! – кăшкăрать арăмĕ.**

**– Манăн вара танкпа выляс килет! – парăнмасть упăшки.**

**Вăт мĕн патне çитерет прогресс.**

* * *

**– Çав хĕрарăмсен пĕр совеç те çук! – тарăхать арçын. – Манăн арăм хăйĕн труççине машинăна алшăллисемпе пĕрле пăрахать, манăнне – нускисемпе!**

* * *

**– Ира, манăн çурăм хыçĕнчи алăра – шăккалат. Хăшĕнчине пĕлсен хăналăп, пĕлмесен – çук.**

**– Сылтăмминче-и?**

**– Ой, лайăхрах шухăшла, Ирина!**

* * *

**Пĕчĕк лавкка хуçин – инкек: унăн икĕ енĕпе те тем пысăкăш супермаркетсем уçăлнă. Мĕн тумалла? Çука юлать вĕт! Хайхине юлташĕсем ăс параççĕ:**

**– Эсĕ хăвăн лавккун алăкĕ çине "Çакăнтан кĕмелле" тесе çырса хур...**

* * *

**Тем тунсăхлас килсе кайрĕ... Утиялпа хупланса чӳрече янаххи çине ларса кофе ĕçме шухăшларăм – депресси авăрне лексен шăпах çапла тунине курнăччĕ кинора. Вăт, мур! Утиялпа пĕркенме меллех мар иккен. Кофене хам çине тăкса ятăм. Çитменнине, чӳрече янаххи çине вырнаçаймастăп та. Эх, мĕн тăвас тетĕн – пĕлместĕп эпĕ тунсăхлама!**

* * *

**Секретарша юлташне пуçлăхĕ пирки кӳренсе каласа кăтартать:**

**– Виçĕмкун кевĕр чулсемлĕ мăй çыххи парнелерĕ, ĕнер – хаклă йышши кĕрĕк. Паян вара пĕрлешме сĕнчĕ.**

**– Вăт эсремет! – тарăхать юлташĕ те. – Перекетлеме пуçларĕ те-им?!**

* * *

**Хĕрарăма вĕçĕмсĕрлĕхпе вĕчĕрхентерекен икĕ пулăм: савăт-сапа – хăть те мĕн чухлĕ çу, вăл пурпĕр хушăнсах тăрать, апат-çимĕç – хăть те мĕн чухлĕ хатĕрле, вăл пĕтсех пырать.**


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### СУТАТĂП

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-967-470-46-77**.

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, ПЕСОК, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич**, блоки. Т. 89613393363.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**33.Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки.** Доставка. Т.: 89033220208, Т.8-927-667-46-05.

### ПРОДАЮ

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**37.**Ворота, калитки, **заборы,** навесы. **Ковка,** кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, сайт:metalservis21.ru

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 89176776846.

**123.Гравмассу, песок, бетонные отходы, навоз.** Доставка по низким ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**596.ТЕПЛИЦЫ** по ценам производителя. **Доставка. Сборка.** Т. 48-16-54.

**648.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг, водостоки.** Замер. Доставка. Скидки. Т. 89033220479.

**650.Тротуарную плитку, брусчатку.** Замер. Д-ка. Укладка. Скидки. Гарантия. **Т. 89033220479.**

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8-903-066-29-02, 8-927-667-33-68. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**649.Кровельные, фасадные работы.** Гарантия. **Т. 8-903-322-04-79.**

### ĔÇ РАБОТА

**126. Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики, сварщики.** Питание, спецодежда. Вахта. Тел. 8-925-002-22-38.

**668.** Для работы в Нижегородской области **ТРЕБУЮТСЯ РАЗНОРАБОЧИЕ.** Проживание в общежитии, 3-разовое питание. Оплата после вахты. ООО "Славия" Т. 8-906-133-67-72.


## ТĔКĔР УМĔНЧЕ

### Бананпа

Теркăланă çур банана 1 çăмарта саррипе пăтратмалла. 1 апат кашăкĕ хăйма, 2 чей кашăкĕ пыл хушмалла. Пите çак хутăша сĕрсен ӳт пĕркеленмĕ.

### Хăярпа

Хăяр маски тар шăтăкĕсене пĕчĕклетет, ӳте туртăнтарать. Теркăланă хăярпа хăймана /1:1/ пăтратмалла. Çак хутăша 15 минутлăха пите сĕрмелле.


« ХЫПАР »

Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан М.М.АРЛАНОВ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07

Электрон почти: hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 23.10.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.

428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.

56-00-23 – издательство директорĕ.

Тираж 7966. Заказ 4120.